Н. Б. им. Горького

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 25 ЫТЛАРИКУН 19 (4832) -мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 0—23

Валериан Владимирович КУЙБЫШЕВ

(ВӐЛ ВИЛНИ 3 ҪУЛ ТУЛТАРНӐ ТӖЛЕ)

Виҫӗ ҫул кайала, 1935 ҫулти йанварӗн 25-мӗшӗнче, Парти Тӗп Комитечӗн Политбюро членӗ, ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ, Совет Контрольӗ Комиссийӗн председателӗ Валериан Владимирович Куйбышев йулташ вилнӗ.

Куйбышев йулташӑн пурнӑҫӗ вӑрӑм пулман (1888—1935 ҫул). Анчах ҫак кӗске пурнӑҫ питӗ те паха, ҫак пурнӑҫран 30 ҫулӗ революцилӗ кӗрешӳ ҫулӗ пулнӑ. Куйбышев йулташ ҫамрӑклах революци ҫулӗ ҫине тӑнӑ, большевиксен ретне кӗнӗ, вӑл ҫак ҫул ҫинчен пӗрре те пӑрӑнман, вӑл ӗҫхалӑхне ирӗке кӑларассишӗн пӗтӗм вӑй-хала хурса кӗрешнӗ.

Куйбышев йулташ пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнисене вуланӑ чухне, ун ҫинчен йулташӗсем тата хӑй аса илнисене вуланӑ чухне, унӑн пурнӑҫӗнчи лӑпкӑ мар тата кӗрешӳлӗ вӑхӑтсене аса илнисене вуланӑ чухне борец, революцин шанчӑклӑ тата мухтавлӑ салтакӗн сӑнне куратӑн.

1905 ҫултах, Петербургри ҫарпа медицина академин студенчӗ, 17 ҫулхи Куйбышев большевиксен организаци членӗ пулса, парти вӑрттӑн литературӑ сарас, хӗҫпӑшал кӳрсе килсе вӗсене пӑхса усрас тӗлӗшпе пана ответлӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртнӗ.

Студентсем правительствӑна хирӗҫле тунӑ ӗҫе хутшӑннӑшӑн, Куйбышев йулташа академинчен кӑларса йанӑ. Вӑл Омск хулине кайнӑ, унта вӑрттӑн пропагандис пулса ӗҫленӗ, большевикла вӑйсене пӗрлештерес тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ. 1906 ҫулта ӑна тата унпа пӗрле партин хулари конференцинче пулнисене тытса хупнӑ та, ҫар судне панӑ. Телей пулнӑ пирки ҫеҫ, Куйбышев йулташа каторгӑна йамала туса приговор йышӑнайман.

Ҫак вӑхӑтран пуҫласа Куйбышев йулташ пӗрмайах партин пропагандисӗпе организаторӗ пулса ӗҫленӗ. Каинск, Томск, Петропавловск, Омск, Харьков, Петербург, Самар—Куйбышев йулташӑн вӑрттӑн ӗҫӗн географийӗ пит те пысӑк. Куйбышев йулташӑн революцилӗ ӗҫне тимиҫе хутчен те тӗрмене хупни, ссылка йани чарнӑ. Анчах вӑл революцилӗ ӗҫе нихӑҫан та, ниҫта та пӑрахман.

Куйбышев йулташ йулашки хут вӑрттӑн ӗҫленӗ вӑхӑт 1916 ҫулсенче пулнӑ. Вӑл 1916 ҫулта ссылкӑран тарса ултавлӑ паспӑртпа Самара килнӗ. Самара килсен вӑл ҫийӗнчех, большевикла организаципе ҫыхӑну тытнӑ, малтан пекарнинче табельщик, кооперативра бухгалтер пулса ӗҫленӗ. Йулашкинчен ӑна парти труба тӑвакан заводра вӑрттӑн ӗҫлеме фрезеровщик туса йанӑ.

Фрезеровщик пулса ӗҫленӗ вӑхӑта В. В. Куйбышев йулташ хӑй аса илнинче ҫапла каланӑ:

„Епӗ Иосиф Андрейевич Адамчик йатлӑ ҫын паспӑрчӗпе пурӑннӑ. Епӗ заводра 8 уйӑха йахӑн ӗҫлерӗм. Сӑмах май каласан, заводра манӑн ӗҫ пӗтнӗ тӗле, епӗ вата фрезеровщик ӗҫленӗ нормӑран ытларах ӗҫленӗ“.

Ҫапла пулнӑ Куйбышев йаланах. Вӑл ӑҫта ӗҫленӗ, йаланах отлично ӗҫленӗ. Ҫак пахаҫын питӗ пултарулӑ тата ӗҫе йуратнипе паллӑ пулнӑ.

1916 ҫулта Самар хулинчи большевиксен ушкӑнӗ партин Атӑл тӑрӑхӗнчи конференцине пухма йышӑннӑ. Анчах жандармери ҫак конференцине хытӑ сыхланӑ. Конференци пулайман. Конференцине пухӑннисене пурне те, ҫав шутрах Куйбышев йулташа та арӗсленӗ. Большевиксен организацинче ӗҫленӗшӗн, ссылкӑран тарнӑшӑн Куйбышев йулташа Турухан крайне 5 ҫуллӑха ссылка йамала тунӑ.

Февральти революцин сассисем Петроградра ҫеҫ мар, пур ҫӗрте те илтӗннӗ чухне, Куйбышев йулташа, ссылка йанӑ ҫынсен ушкӑнӗпе пӗрле ҫурран ҫурҫӗреле хӑваланӑ. Ссылка йанисене пӗрпӗрне алӑран сӑнчӑрпа ҫыхнӑ, чарӑнмалли вырӑнсенче ҫеҫ вӗсен аллисенчи тӑлӑсене хывса илнӗ. Ссылка йанисен ушкӑнӗ Красноярск хулинчен 200 ҫухрӑм иртсе кайсан, почтӑ та, телеграф та пулман, тӗттӗм йалта, 1917 ҫулти мартӑн 6-мӗшӗнче Куйбышев йулташ февральти революци ҫинчен пуринчен малтан пӗлнӗ. Вӑл ҫийӗнчех савӑнӑҫлӑ хыпар ҫинчен йулташӗсене пӗлтерме чупнӑ.

„Ачасем ытти чухнехи пекех лӑпкӑ ларӗҫҫӗ, чей ӗҫеҫҫӗ,—тесе каласа парать Куйбышев йулташ хӑй аса илнисенче. Епӗ вӗсене кӑшкӑратӑп:

— Йулташсем, революци!

Вӗсем ман ҫине пӑхрӗҫ, кайран пурте пӗр харӑс кулса йачӗҫ.

— Акӑ есӗ селӗм суйа сӑмах саратӑн.

— Ҫапла, йулташсем, революци!

— Каллех ҫӗнӗрен кулса йараҫҫӗ.

— Ну, есӗ чӑн пулнӑ пекех, ӗненмелех суйатӑн.

Йулашкинчен епӗ кусҫуль йух тарсах саспа кӑшкӑратӑп:

— Йулташсем, революци пулнӑ!

Сасартӑк пурте ӗненчӗҫ. Ку вӑл нихӑҫан манми вӑхӑт пулнӑ. Пурте ура ҫине тӑчӗҫ, савӑнса „Марсельйеза“ йуррине йурласа йатамӑр“.

Куйбышев йулташ каллех Самарта. Вӑл парти организацине йертсе пырать, пулас пролетарилӗ революцишӗн кӗрешме вӑйсене пухса пӗтӗҫтерет. Куйбышев йулташ йертсе пынипе Самарта Совет влаҫӗ пулать. Вӑл Самарти ревкомӑн пӗрремӗш председателӗ.

Куйбышев пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ паллӑ тапхӑр, граждан вӑрҫинчи аслӑ ҫапӑҫусен тапхӑрӗ пуҫланать. Чехословаксен, ес-ерсен, меньшевиксен бандине хирӗҫ тухнӑ Атӑл тӑрӑхӗнчи пролетариатӑн кӗрешӳвне йертсе пынӑ.

Парти ӑна фронтӑн чи кирлӗ участкисене йарать.

Куйбышев йулташ—пӗрремӗш ҫарӑн политкомиссарӗ тата реввоенсовет членӗ, унтан 4-мӗш ҫарӑн реввоенсовет членӗ, хӗвелтухӑҫ фрончӗн кӑнтӑрти ушкӑнӗн реввоенсовет членӗ, 11-мӗш ҫарӑн реввоенсовет членӗ, Туркестан фронтӗнчи ҫарӑн реввоенсовет членӗ. Пур ҫӗрте те, чи хӑрушӑ тата чи ответлӑ ӗҫсенче те, Куйбышев йулташ паттӑрлӑх, ӗҫлеме пултарнине, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса кӗрешнине кӑтартнӑ. Парти хушнӑ ӗҫе йаланах пысӑк хисеплӗхпе пурнӑҫа кӗртнӗ.

1920 ҫулти декабӗр уйӑхӗнчен пуҫласа Куйбышев йулташ „мирлӑ“ ӗҫре ӗҫленӗ. Профсойуз, хуҫалӑх, парти, каллех хуҫалӑх, план ӗҫӗнче—ҫак государствӑпа партин пысӑк дейателӗн тавракурӑмлӑхӗпе опычӗ пысӑк пулнӑ. 1921 ҫулта Куйбышев йулташ Профсойузсен Тӗп Совечӗн президиум членӗ, Халӑх Хуҫалӑхӗн Аслӑ Совечӗн президиум членӗ, Главелектро начальникӗ. 1922—1923 ҫулсенче парти Тӗпкомӗн секретарӗ. 1923 ҫултан пуҫласа 1926 ҫула ҫитиччен Тӗп Контроль Комиҫҫин председателӗ тата Ӗҫлекенсемпе Хресченсен Инспекцин Халӑх Комиссарӗ. 1926 ҫултан пуҫласа 1930 ҫула ҫитиччен Халӑх Хуҫалӑхӗн Аслӑ Совечӗн председателӗ, 1930 ҫултанпа ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ, Государства План Комиҫҫин председателӗ. Куйбышев йулташ йачӗпе пирӗн промышленнӑҫа аталантарас, Совет хуҫалӑхӗн ӗҫӗнче ӗҫлекен кадрсене вӗрентсе ҫитӗнтерес, промышленнӑҫ ӳсӗмӗн пӗрремӗш пйатилеткӑ планне тата пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗн ӳсӗмӗн иккӗмӗш пйатилеткӑ планӗсене тӑвас пысӑк ӗҫсем ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Ҫак ҫулсем—социалисӑм строительствин паттӑр ҫулӗсем пулнӑ. Куйбышев йулташ пӗтӗм вӑйа, пӗтӗм пултарулӑха хурса, етемлӗхӗн чи паха ӗҫӗшӗн кӗрешнӗ, ӑна парти хушнӑ ӗҫе чӗререн тӑрӑшса туса пынӑ. Ленин—Сталин партин шанчӑклӑ ывӑлӗ, вӑл партин тӗп ҫулйӗрӗшӗн ҫирӗппӗн кӗрешнӗ, партин пӗрлӗхӗпе хӑвачӗ ҫине тапӑнакансене ҫапса пирӗн тӑван ҫӗршывӑн хӑватне хавшатма хӑтланакансене хайаррӑн ҫӗмӗрсе пынӑ. Вӑл халӑхӑн усал тӑшманӗсене: троцкисӗсене, зиновйевцӑсене, бухаринцӑсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, вӗсене ҫапса аркатнӑ. Вӑл парти ӗҫӗшӗн, рабочи клас ӗҫӗшӗн чӗререн тӑнӑ, ҫавӑнпа та вӑл партипе рабочи клас тӑшманӗсене нихӑҫан та хӗрхенмен. Вӑл ӗҫлеме Сталин йулташран вӗреннӗ. Куйбышев йулташ граждан вӑрҫи ҫулӗсенчех Сталин йулташ йертсе пынипе ӗҫленӗ, Сталин йулташ йертсе пынипех хӑйӗн ӗмӗрӗн йулашки кунӗсемччченех партипе рабочи клас ӗҫӗн ответлӑ участкисенче ӗҫленӗ.

Куйбышев йулташӑн пурнӑҫӗн кӗске сыпӑкӗсене илсе кӑтартнинченех—коммунисӑм ӗҫӗшӗн шанчӑклӑ кӗрешекен Куйбышев йулташ пирӗн партишӗн, пирӗн совет ҫӗршывӗнчи рабочи класшӑн, пӗтӗм ӗҫхалӑхӗшӗн мӗнле пысӑк ҫухату пулни пуриншӗн те паллӑ.

Кашни ҫын хайне паллӑ уйрӑмлӑхӗсемпе ытти ҫынсенчен уйрӑм тӑрать. Вӑл ҫын мӗн чухлӗ аслӑрах, пултарулӑрах, ҫавӑн чухлӗ ҫав уйрӑмлӑхсем пысӑкрах, ҫавӑн чухлӗ ҫав ҫын вилни пирӗншӗн ытларах туйӑмлӑ, ҫавӑн чухлӗ ун пирки хуйӑх ытларах пысӑк.

Вӑйлӑ, пысӑк аслӑ, пултарулӑ Куйбышев йулташра ҫак пахалӑхсем пулнӑ, ҫавӑнпа та вӑл пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисемшӗн уйрӑмах ҫывӑх, уйрӑмах хаклӑ пулнӑ.

Куйбышев йулташ ҫамрӑклах подпольщикӑн, профессионал революционерӑн ҫулӗ ҫине ҫирӗп тӑнӑ. Куйбышев йулташ профессионал-революционер ҫулӗ ҫине тӑни революцилӗ кӗрешӳ питӗ ҫивӗчленсе ҫитнӗ вӑхӑтпа (1905 ҫулпа) ҫыхӑнса тӑрать. Уй чухне революцилӗ ӗҫ тунӑшӑн тӗрме, ссылкӑ, каторга хӑратса тӑнӑ. Ҫамрӑк Куйбышев хӑйне хӗрхенмен, вӑл чи хӑрушӑ ӗҫсене тума илнӗ, вӑл нимӗн канмасӑр ӗҫленӗ. Ҫав хӑрушӑ ҫулсенче Куйбышев йулташ миҫе хутчен вилӗм умӗнче пулман пулӗ! Унӑн асаилӳвӗсене вулар—1907 ҫулта ҫар судне мӗнле ҫирӗплӗхпе кайнӑ вӑл!

1905—1917 ҫулсем большевиксен партийӗшӗн питӗ пысӑк испытани тапхӑрӗ пулнӑ. Ленинпа Сталинӑн стратегинче тӗп вырӑвта партин вӑрттӑн ӗҫлекен ҫирӗп организацисене сыхласа хӑварасси, вӗсене нумайлатасси, ҫирӗплетесси пулнӑ. Пӗтӗм меншевикла тата контрреволюцилӗ лагӗр массӑсене революцилӗ йухӑма ҫӗклентерессине хирӗҫ кӗрешнӗ. Либералсем ултавла ӗҫсем тунӑ, меншевиксем предательле ӗҫсем тунӑ, жандармери провокацилӗ ӗҫсем организациленӗ, тӗрме хуҫисем урса кайсах репрессилӗ ӗҫсем тунӑ. Ҫаксене пурне те Ленин—Сталин партине пӗтерес тӗллевпе тунӑ.

Никам иккелентерейми ҫирӗплӗх, революци ӗҫне чӗререн йуратса, пӗтӗм вӑйхалтан туса пыни, нимӗнле хӑрушлӑхран та хӑраманни, ҫирӗп йулташлӑх—патша самани условийӗсенче вӑрттӑн ӗҫлекен чӑн-чӑн большевикӑн чи хаклӑ йенӗсем Куйбышев йулташӑн революци ӗҫӗнче малтанхи утӑмсенчех палӑрчӗҫ. Акӑ вӑл бомбӑсем ҫакса тултарнӑ, хӗҫпашалланнӑ. Вӑл Мускаври рабочисем вальӑи 1905 ҫ. декабӗр уйӑхӗнчи ҫапӑҫава тухма хатӗрленӗ хӗҫпӑшала, транспорта сыхласа, Питӗрти йулташсене пулӑшать. Акӑ ӑна полици йӗрлесе тупнӑ, унӑн кӗсйинче урӑхҫӗршывсене тухса каймали паспӑрт пур. Унпа вӑл кӑшт канма тата тахҫантанпа курма ӗмӗтленнӗ В. И. Ленина курма шутланӑ. Анчах вӑл каймасть, жандармсем йӗрлесе тупнӑ ҫынна вилӗмрен хӑтарас майпа урӑхҫӗршыва тухса тарма хӑйӗн паспӑртне парса йарать.

Вӑл революцилӗ кӗрешӳре ӳссе ҫитӗнет, паттӑр, ҫамрӑк, лайӑх йулташ чи хӑрушӑ самансенче те вӑл пӗр улшӑнми савӑнӑҫлӑ, хастар. Вӑрттӑн ӗҫлесе унӑн вӑй-халӗ тата шанчӑклӑ йулташӑн, боецӑн чи кирлӗ, хаклӑ йенӗсем ҫирӗпленчӗҫ.

Аслӑ Октабӗр революцийӗн малтанхи кунӗсенче Куйбышев йулташӑн йачӗ граждан вӑрҫипе вӑрҫӑлӑ ҫапӑҫусенчи пултарулӑхӗсемпе, паттӑрлахӗсемпе ҫыхӑнса тӑрать. Ҫав пултарулӑхсемпе паттӑрлӑхсене, Ленин каланӑ пек, пролетари диктатурийӗшӗн ҫӗнтерӳлӗ кӗрешнӗ историне ӗмӗр манмала мар ҫырса хӑварнӑ. Ҫак икӗ тӗнче кӗрешӗвӗнче Куйбышев йулташӑн пултарулӑхӗсем—унӑн ҫирӗплӗхӗ, организацилӗ ӗҫе ӑста тума пӗлни, талант, ӗҫе тӳлеккӗн, хӑйулӑн тытӑнни—татах та пысӑкраххӑн палӑрчӗҫ.

Ҫапӑҫусен тапхӑрӗ иртсен, социалисӑмлӑ хуҫалӑх строительствин йӑвӑр ӗҫӗсем пуҫлансан, Куйбышев йулташ ҫак ӗҫе хӑйӗн организацилӗ ӗҫсенчи ҫӗнӗ хаклӑ пултарулӑхӗсемпе хутшӑнать.

Манӑн унпа ҫак унӑн ӗҫӗнчи виҫҫӗмӗш тапхӑрӗнче — государствӑн пит те пысӑк ӗҫне туса пынӑ тапхӑрта, тӗл пулмала пулчӗ. Куйбышев йулташпа тӗл пулса паллашсан, вӑл пит простой, хӑйне-хӑй мӑнаҫла тытман, пуринпе те йулташла калаҫакан ҫын пулни куранчӗ. Куйбышев йулташ ӗҫе татӑклӑ туни, питӗ нумай ӗҫлеме пултарни тӗлӗнтерчӗ.

Мана унпа пӗрле тепӗр чухне хуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх резолюцисем хатӗрлеме тиветчӗ. Кашнинчех ҫакна куратӑм: Куйбышев йулташ кӑнтӑрпа ҫӗрлене уйӑса тӑмасчӗ, сехетсен шутне пӗлместчӗ, хатӗрлекен документӑн кашни сӑмахнех тӗплӗн шухӑшласа ҫыратчӗ.

Унӑн Тӗп Контроль Комиҫҫин, Халӑх хуҫалӑхӗн Пӗтӗм Сойузри Совечӗн, Государствӑ планӗн председателӗсем пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра каланӑ сӑмахсем—вӑл хуҫалӑхӑн тӗрлӗрен пайӗсене пит те тӗплӗн пӗлнипе, Ленин—Сталин партин тӗп ҫулйӗрӗ тӗрӗссине ним иккеленмесӗр ӗненнипе палӑратчӗҫ.

Куйбышев йулташ вӑрттӑн ӗҫлекен революционер-и, Хӗрлӗ Ҫар боецӗ-и, пролетариатӑн паттӑр вӑйӗсен организаторӗ-и, государствӑн пысӑк ӗҫсене туса пыраканӗ-и—пур чухне те вӑл пирӗн ҫӗршывӑн ӗҫҫыннисемшӗн пуриншӗн те пӗр пекех ҫывӑх та хаклӑ пулнӑ.

Г. Кржижановский.

Депутатсем таврӑнчӗҫ

Йанварӗн 22-мӗшӗнче ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн Чӑваш республикӗнчен суйланӑ депутачӗсем ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗнчен таврӑнчӗҫ.

Ҫак кунсенче депутатсем хӑйсене суйланӑ округри суйлавҫӑсене ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗн ӗҫӗсем ҫинчен каласа пама кайаҫҫӗ.

Аслӑ Совет Ҫессийӗн ӗҫӗсене саламласа

Ӗнер, йанварӗн 24-мӗшӗнче, Шупашкарта, ССРС Аслӑ Совет Ҫессийӗн ӗҫӗсене чысласа, Шупашкар ӗҫҫыннийӗсен пысӑк митингӗ пулса иртрӗ.

Митинга ПСК(б)П Шупашкар хула комитет секретарӗ **Смирнов** йулташ уҫрӗ.

ССРС Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗн историлӗ ӗҫӗсем ҫинчен аслӑ Совет депутачӗсем **П. Д. Краснов** тата **Л. С. Спасов** йулташсем каласа пачӗҫ.

Митингра Шупашкар ӗҫҫыннисен йачӗпе: рабочисенчен—„Водосвет“ рабочийӗ **Китайев**, Шупашкарти интеллигенцирен—учительница **Дмитрийева** йулташсем тухса сӑмах каларӗҫ.

Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне—Сталин йулташа тӗнчери чи демократилӗ Конституци туса панӑшӑн чӗререн тав турӗҫ. Вӗсем аслӑ социалисӑм ҫӗршывӗн аслӑ парламентне, Аслӑ Совет Президиумӗн председательне М. И. Калинин йулташа, Совет правительствин пуҫлӑхне В. М. Молотов йулташа хӗрӳлӗн саламларӗҫ.

Митинг ССРС Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗн ӗҫӗсене пӗтӗмӗшлӗх ырласа резолюци йышӑнчӗ.

ҪЕҪҪИ СОВЕТ ХАЛӐХӖН ҪИРӖП ПӖРЛӖХНЕ КӐТАРТСА ПАЧӖ

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн депутачӗсем пӗрремӗш историлӗ Ҫессийӗн—чӑн-чӑн халӑх парламентӗнчен таврӑнчӗҫ. Вӗсем пурте пысӑк ҫӗкленӳпе, хӑйсен ӗҫне вӑйпа тытӑнас кӑмӑлпа тулса тӑраҫҫӗ. Аслӑ Совет Ҫессийӗнче Сталин йулташпа пӗрле пулса государствӑн пысӑк ыйтӑвӗсене сӳтсе йавни—пирӗн депутатсене ҫӗнӗ вӑй кӳрет, ҫӗнӗ вӑйпа кӗрешме хавхалантарать. Ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне Сталин йулташа курни пирӗн депутатсене вӑйхал пачӗ. Аслӑ Совет Ҫессине Мускав хулинчи ӗҫҫыннисен делегацийӗ пырса хӑйсен депутачӗсемпе пӗрле, Ҫессире мӗн пур депутатсене саламларӗҫ, вӗсем Совет халӑхӗн ҫирӗп пӗрлӗхне кӑтартса пачӗҫ.

Кремльре партипе правительствӑ руководителӗсем депутатсене питӗ ӑшшӑн йышӑнса илни пире тата савӑнтарчӗ.

Ҫессирен таврӑннӑ чухне кашни депутат хӑйӗн малашнехи ӗҫӗсене палӑртса хучӗ. Пурте часрах вырӑнсене таврӑнса, хӑйсене хӗрӳлӗн кӗтсе тӑракан суйлавҫӑсемпе тӗл пулса калаҫма васкарӗҫ.

Ҫессире сӳтсе йавнӑ ыйтусем питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни, пирӗн умма, депутатсен умне, ҫав тери пысӑк ответлӑх хурать, хамӑр суйлавҫӑсене Ҫесси ӗҫӗсем ҫинчен каласа кӑтартма тата вӗсене хавхалантарма хушать.

Депутатсем хӑйсен суйлавҫисене тӗнчери пӗртен пӗр чӑн-чӑн халӑх парламенчӗн решенийӗсем ҫинчен, ҫак решенисем Сталин йулташ аслӑ Совет ҫӗршывӗнчи халӑхсен тусchallenges...

Депутатсем хӑйсен суйлавҫисене Аслӑ Советӑн Президиумне, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗне суйлани ҫинчен, Аслӑ Советра тунӑ йаланлӑх комиҫҫисем—саккунсем хатӗрлекен, бюджет тата йутҫӗршыв ӗҫӗсен комиҫҫийӗсене туни мӗн таран пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен каласа кӑтартма кайаҫҫӗ.

Депутатсем, Молотов йулташ тухса каланӑ чаплӑ сӑмах ҫинчен, унӑн сӑмахӗ ытам ҫитми вӑйпа тулса тӑни ҫинчен каласа кӑтартӗҫ.

Молотов йулташ ҫӗнӗрен тунӑ Тинӗс Ҫар флочӗн Халӑх комиссариачӗ ҫинчен каланӑ сӑмахӗсене депутатсем чӗререн хӗрӳлӗн алӑ ҫупса йышӑнса илчӗҫ.

Совет правительствин шалти тата тулти политикине Ҫесси пӗр кӑмӑлпа ырларӗ.

Пур депутатсем те, Совет Сойузӗ хӑйӗн тулти политикинче пысӑк сисӗмлӗх тытса тӑнине, империалисӑмла ҫаткӑнсемпе вӑрӑхурахсене тивӗҫлӗ отпор пама йаланах хатӗр тӑнине лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

„Пирӗн задачӑ вӑл—Совет Сойузӗн типӗ ҫӗрти чиккисен тата тинӗс ҫыранӗсен оборонине тата ҫӳле ҫӗклесси пулать“,—терӗ Молотов йулташ.

Аслӑ Советӑн пӗрремӗш Ҫессине саламлама пынӑ морйаксем, хӑйсем совет государствин тинӗс чиккисен оборонине ҫирӗплетме йаланах хатӗр тӑни ҫинчен каласа кӑтартрӗҫ.

„Пирӗн ҫӗршыв аслӑ, унӑн темиҫе пин тӑршшӗ чикӗсем тинӗспе чикӗленсе тӑраҫҫӗ, ку вӑл пире хамӑрӑн Хӗрлӗ флот ҫирӗп те вӑйлӑ пулмали ҫинчен асӑрхаттарса тӑрать“,—терӗ Молотов йулташ.

Йутҫӗршыв ӗҫӗсен комиҫҫине организациленӗ те паллӑ.

Депутат Жданов йулташ, Молотов йулташ пекех, хӑйӗн сӑмахӗнче, сӑнчӑртан вӗҫерӗннӗ агрессорсене хыттӑн асӑрхаттарчӗ. Ҫессири депутатсем Жданов йулташӑн сӑмахне тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑнса илчӗҫ.

Пирӗн депутатсем хӑйсен суйлавҫисене, Ҫесси решенийӗсенчен тухакан задачӑсем ҫинчен каласа кӑтартма васкаҫҫӗ, йаланах сисӗмлӗ пулма, Совет Сойузне сыхлама йаланах хатӗр тӑма, ҫитес ҫуракине лайӑх хатӗрленме, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫула часрах туса пӗтерме, вӑрман касса турттарас плана тата ытти хуҫалӑхлӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса ҫитерме чӗнеҫҫӗ.

Чӑваш республикӗнчен Аслӑ Совета суйласа йанӑ депутатсем, Чӑваш ӗҫхалӑхӗ, аслӑ Совет Сойузӗнчи мӗнпур халӑхсемпе пӗрле, Аслӑ Советӑн пӗрремӗш Ҫессийӗн ӗҫӗсене пӗр кӑмӑлпах ырлассине, хӑйсен умне партипе правительствӑ тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫлама йаланах хатӗррине ҫирӗппӗн шанса тӑраҫҫӗ.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн депутачӗ З. А. Андрейева.

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ 20 ҫул тултарас умӗн

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ 20 ҫул тултарнине уйавлама пӗтӗм ҫӗршывӗпе тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ.

Стрелецк районӗнчи (Курск облаҫӗ) мӗн пур йалсоветсенче кружоксем организациленӗ, вӑл кружоксенче колхозниксем пӑшал пеме вӗренеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех политзанятисем те пулса иртеҫҫӗ. Кружоксенче колхозницӑсем нумай.

Курскри Хӗрлӗ Ҫар ҫуртӗ йубилей кунӗсем тӗлне „Ленинпа Сталин — Хӗрлӗ Ҫар организаторӗсем“ тата „Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ 20 ҫул тултарни“ темӑпа выставкӑ организацилет, художествӑлӑ пултарулӑх олимпиади туса иртерет. Ҫуртра хисеп хӑми тӑваҫҫӗ, унта Ҫарӑн чи лайӑх подразделенисене, ҫар ӗҫӗпе политикӑна вӗреннӗ ҫӗрти отличниксене кӗртеҫҫӗ.

Минск гарнизонӗнчи боецсемпе командирсем — физкультурниксем йубилейе спорт тӗлӗшпе массӑлӑ ӑмӑртусем организацилесе палла тӑваҫҫӗ. Хоккей-баскетбол тата волейбол йенӗпе мала тухас тӗлӗшпе вылама пуҫланӑ та йетӗ.

(ТАСС).

Гаглойев йулташ—Ҫурҫӗр-Оҫети АСС Республикӗн Йустици Халӑх Комиссарӗн заместителӗ

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн депутачӗ Иван Михайлович Гаглойев йулташ Мускавран Аслӑ Совет Ҫессинчен таврӑнсан ҫӗнӗ ӗҫ тума—Ҫурҫӗр-Оҫети АСС Республикӗн Йустици Халӑх Комиссарӗн заместителӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ. Ҫак ӗҫе уйӑрса лартиччен малтан Гаглойев йулташ Садонск рудникӗсен Киров йачӗпе тӑракан шахтинче бурщиксен чи лайӑх стахановла бригадин бригадирӗ пулса ӗҫленӗ.

(ТАСС).

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Р. И. ЕЙХЕ йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитет Пленумĕнче 1938 çулхи йанварĕн 18-мĕшĕнче тунă доклад

Сталин йулташ, партин XVII-мĕш сийесĕнче тунă отчотлă докладра, çĕршывăн йалхуçалăхне тĕпчесе тухса, çапла каланă:

„Тĕрĕссипе илсен, отчотлă тапхăр йалхуçалăхĕшĕн хăвăрт çĕкленсе ÿссе пымали тапхăр мар, вăл пуринчен ытларах çак çитес вăхăтрах хăвăрттăн çĕкленсе вăйлăн ÿссе пымали условисене хатĕрленĕ тапхăр пулчĕ".

1938 çул тĕлне ĕнтĕ социалисăмла йалхуçалăхĕ хăйĕн ÿсĕмĕн çакăн пек тапхăрĕнче тăрат:—вăл сталинла икĕ пйатилеткă хушшинче туса хунă майсене чи туллинрех пурнăçа кĕртме пултарат.

Çĕршывăн йалхуçалăхне хăватлăн та хăвăрт çĕклентермели майсем мĕнлескерсем-ха вĕсем?

Пĕрремĕш. ССР Сойузĕнче 1937 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 243 700 колхоз тунă, вĕсенче çĕршыври мĕнпур хресчен килĕсен 93 процентĕ пĕрлешнĕ. Вунпилĕк мĕлйуна йахăн хресчен килĕсем колхозсенче пилĕк çул хушши ытла тăраççĕ, урăхла каласан, вĕсем ĕнтĕ коллективлă хуçалăхра ĕçлеме пысăк опыт тата хăнăху туйанна.

Иккĕмĕш. Йалхуçалăхне пĕтĕмпех çĕнĕрен авăрлантарнă. Револуци пуличченхи вăхăтра Российăри йалсенче 10 мĕлйун ытла сухапуççем, косулсем тата йăвăç плугсем, 4,5 мĕлйун тимĕр плугсем тата 18 мĕлйуна йахăн йăвăç çÿресем пулнă. Сложнăйрах, лайăхрах йалхуçалăх орудийĕсемпе машинсем пит сахал тата помещиксемпе кулаксен хуçалăхĕсенче анчах пулнă.

Социалисăмла индустри колхозсене малта тăракан техникăпа, чи çĕнĕ машинсемпе авăрлантарчĕ.

1938 çул пуçланнă тĕле çĕршывра 5819 МТС пур, вĕсенче—367 пин трактор, 104,6 пин комбайн, 62,3 пин автомобил, ытти чи лайах машинсем вуншар пин пур. Государствă тунă машинă-тракторлă станцисем хăйсен машинĕсемпе пур колхозсене те, хăшпĕрисемсĕр пуçне, ĕçлесе параççĕ.

Халхи вăхăтра йалта пур машинăсемпе йалхуçалăхĕнчи тĕп ĕççене пурне те механизацилесе çитерме пулат. 1937 çулта, тракторсемпе кирлĕ пек усă курайман пулсан та, çураки валли сухалас ĕçе механизацилессине 64 процента, кĕраки валли сухалассине—78 процента, кĕрсухи сухаланă чухне—63 процента çитернĕ. Пĕрчĕлĕ тырăсем акнă пĕтĕм çĕр хисепĕнчен 3,2 мĕлйун гектар çинчен комбайнсемпе пуçтарса кĕртнĕ, вăл мĕн пурĕ пучахлă тырăсем акнă çĕр хисепĕн 37 процентĕ пулат.

Виççĕмĕш. Йалхуçалăх работникĕсен квалификацилĕ кадрĕсене тунă.

Кашни трактор, комбайн, молотилкă çĕвĕ çынсем ÿсмели никĕс пулчĕç. Çĕршер пин хресченсем çĕнĕ техникăна вĕренсе алла илчĕç, йалхуçалăхĕнчи ĕç чылайах ĕнтĕ индустрири ĕçĕн пĕр тĕслĕхĕ пулса тăчĕ.

Халхи вăхăтра, ку вăл туллин шута илни мар-ха, колхозлă йалта пур: трактористсем—734 пин, комбайнерсем—165 пин, шоферсем—124 пин, йĕтĕн татакан машинистсем—10 пин. Çав çынсенчен ытларахăшĕ нумайах та пулмаст иртнĕ вăхăтра мотор çинчен нимĕн те пĕлмен. Халĕ ĕнтĕ вĕсем пинĕ-пинĕпе çÿлĕ ĕçтухăçлăхĕн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Коллективизаци тата йалхуçалăхне çĕнĕ техникăпа авăрлантарни, кадрсем ÿсни çакна пачĕç—1937 çулта йалхуçалăх продукцийĕ пысăк хăвăртлăхпа хушăнчĕ, ун пеккине пĕр капиталисăмла çĕршыв та пĕлмен, пĕлмест те, продукци çавăн пек пысăк хăвăртлăхпа хушăнни халиччен пирĕн социалисăмла промышленнăçăн анчах пулнă.

1937 çулта йалхуçалăх продукцийĕ хушăнни тырпул лайăх пулнă 1935 çулхинчен пĕрре çурă хута йахăнах нумайрах пулчĕ. Çĕршыв Сталин йулташ çулленех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă тăвасси çинчен лартнă задачăна пурнăçа кĕртесси патне таччăнах çитсе тăчĕ. 1937 çулта тĕштырăсен мĕн пур продукцийĕ, малтанласа шутласа тухни тăрăх, 7 мĕлйард пăта йахăн пулчĕ.

Йалхуçалăхĕнче тунă çитĕнÿсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе совет правителстви колхозсем çине калама çук тимлĕн пăхса пулăшса пынин резултачĕ, партин пур организацийĕсен пысăк ĕçĕн, колхозниксĕн массисем активлă, çĕкленÿлĕ ĕçленин резултачĕ пулса тăраççĕ.

Анчах, йалхуçалăхĕн вăйлă авăрланувĕпе пит çителĕксĕр усă курнине болшевикла тÿрремĕн йышăнас пулат.

Пур културăсен тухăçне малала хăпартассине пурнăçа кĕртмеле

Йалхуçалăхĕнчи тĕп ĕççен планне йалхуçалăхĕн пур отраçĕлĕсене те кĕртмен. Унта, сăмахран, вылăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмели план çук, ăна правителствă уйрăмăн пăхса тухат. Йалхуçалăх ĕçĕсен планне тырпулсен тухăçĕ килекен ĕççене кĕртнĕ.

Иртнĕ çулсенчи плансемпе танлаштарсан кăçалхи планăн тĕп уйрăмлăхĕ çакă пулат,— вăл йалхуçалăхĕнчи пур тĕп ĕççем тăрăх та: çуракипе кĕраки, таса çĕртме тата кĕрхи çĕртме сухаласси тĕлĕшпе заданисене пĕр вăхăтрах палăртса парат. Иртнĕ çулсенче, пурте пĕлеççĕ, планра çуракипе çĕртме тăвас ĕççене çеç палăртнă пулнă. Кĕрхи сухапа кĕрхи çĕртме планне кайарахпа парса тăнă.

Кăçалхи çул правителствă çулталăк пуçламĕшĕнче пĕр вăхăтрах йалхуçалăхĕнче çулталăк хушшинче тумали пур ĕççем тĕлĕшпе те план парат.

Çакна епĕр колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшпе çирĕплетес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе тума пултаратпăр,—вăл ĕнтĕ социалисăмла йалхуçалăхĕ организацилĕх йенĕпе çÿлĕ пусăма çитнине кăтартса тăрат.

Йалхуçалăхĕнчи пур тĕп ĕççем тĕлĕшпе те çулталăк пуçламĕшĕнче государствăран задани илсе, колхозсем, çав заданисем тăрăх, хăйсен производствине татăклăнрах планлама, пур пек майсемпе туллин усă курассине палăртса хума пултараççĕ.

1938 çулта колхозсемпе йединоличниксен акмали пĕтĕм çĕр лаптăкĕ 117 мĕлйун та 693,5 пин гектар, урăхла каласан, 1937 çулта акнинчен 1 мĕлйун та 714,6 пин гектар ытларах пулат.

Мĕн пурĕ акмали çĕр лаптăкĕ ÿсвĕ вăхăтрах, тĕштырăсем акмали лаптăк чакат. Кăçалхи çул тĕштырăсем 1937 çулта акнинчен 2 мĕлйун та 967,5 пин гектар сахалрах акмала пулат.

Мĕне пĕлтерет-ха вăл?

Пĕрремĕшĕнчен, вăл епĕр ĕнтĕ, тĕштырă ыйтуне татса парса, тĕштырă тăвас тĕлĕшпе—тĕштырăсем акас лаптăка чакарса, тĕп тимлĕхе тырпулсен тухăçне хăпартас, тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвас ĕç çине хумали пусăма çитнине пĕлтерет.

Сталин йулташ, партин XVII-мĕш сийесĕнче йалхуçалăх ÿсĕмĕн çулйĕрĕсем çинчен калаçа, йалхуçалăхĕнче пертен-пĕр тĕрĕс çулйĕр: „Акакан çĕр талкăшне ниме пăхмасăр ÿстерессинчен çĕре лайăхрах ĕçлемеле тăвасси çине, тĕрĕс пусуçаврăнăшĕ тăвасси çине, тырпул тухăçлăхне хăпартасси çине, кирлĕ пулсан, акакан çĕр талкĕшне чакарасси çине те куçмали çулйĕре тытса пыни" пулат, тесе кăтартса панă.

Иккĕмĕшĕнчен, вăл ытти чылай културăсене акса тăвассине, уйрăмăн илсен—вылăх апачĕ валли акакан културăсен лаптăкăшне, хăвăртраххăн ÿстерме мĕн кирлине ĕнтĕ пурне те туса çитернине пĕлтерет.

1938 çулта вылăх апачĕ валли културăсене акассине иртнĕ çулта акнинчен 1 мĕлйун та 691 пин гектар, çулмали курăксене те пĕрле илсе шутласан—4 мĕлйун та 452 пин гектар ÿстернĕ.

Вылăх апачĕ валли акакан културăсен лаптăкăшне ÿстерни социалисăмла вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме вылăх апачĕсен никĕсне пысăклатат, тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвас ĕçе çăмăллатат.

1938 çулта нумай çул хушши ÿсекен курăксем акмали план тăрăх, колхозсенче клевер 2 мĕлйун та 635 пин гектар, луцернă 1 мĕлйун та 308 пин гектар акма палăртнă.

Пахча-çимĕç културисене акмали лаптăк 437 пин гектар ÿсет, уйрăмăн илсен çĕрулми лартмали лаптăк ÿсет. Пахча-çимĕççем акса тумали лаптăка чи малтан Челабинскпа Свердловск облăçĕсенче тата Йнçет Хĕвелтухăçĕнче ÿстерме палăртнă, вĕсем иртнĕ çулсенче пахча-çимĕçĕсене хăйсене валли çителĕклĕ туман.

1938 çулта çав облăççен вырăнта акса пахча-çимĕççем хăйсене валли çителĕклĕ тумала.

Техникăла културăсене акса тăвас ĕçре те акакан лаптăксене ÿстерес тĕлĕшпе мар, çав културăсене вăйлă тухăçлă тума май паракан ĕççене тăвас тĕлĕшпе пуринчен ытла тимлесе ĕçлеме палăртнă.

Техникăла културăсене акмали лаптăк пĕлтĕр акнинчен 208, 2 пин гектар чакат. Çак чакни вăл пуринчен ытла долгунец текен йĕтĕне сахалрах акма палăртнинчен килет.

Пурте пĕлеççĕ, иртнĕ çулсенче çĕрĕç органĕсенче ларнă тăшманла елементсем йĕтĕн акас тĕлĕшĕпе сăтăрçăла плансем тунă. Йĕтĕн акас тĕлĕшпе пусуçаврăнăшĕсене çĕмĕрекен, темиçе çул хушши йĕтĕн хыççăн йĕтĕн акса пымала тăвакан заданисем панă. Сăмахран, Смоленск облăçĕнче 1937 çулта йĕтĕн хыççăн йĕтĕн 2.485 пин гектар акнă, уйрăм колхозсенче, тĕслĕхрен, „Товарищ", „Ударник" колхозсенче, пĕтĕм çĕр лаптăкĕн çурри йĕтĕн хыççăн йĕтĕн акни пулнă.

Вырăнти организацисен, чи малтан çĕрĕç работникĕсен, задачĕ—йĕтĕн акса тăвас тĕлĕшпе намăслăн кайа йулнине пĕтересси пулат. Колхозлă хуçалăхăн çĕршыва паха йĕтĕн çителĕклипех-ытлашшипех пама мĕн кирли пурте пур. Çавна тума, чи малтан, пусуçаврăнăшĕсене тĕрĕссĕн пурнăçа кĕртсе пымала тăвас пулат, иккĕмĕшĕнчен, клевер çине кулакла сăтăрçăла пăхнине пĕтерес пулат. Çакна асра тытмала—клеверсĕр пуçне вăйлă тухăçлă йĕтĕн пулма пултараймаст.

Планра çĕрмамăкĕ тата çахăр кăшманĕ пек културăсем çине пысăккăн çавăрăнса пăхнă, вĕсем халăхăн кулленхи пысăк ыйтăвĕсене витсе пырас çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Кăçалхи çул çĕрмамăкĕ акассине (совхозсемпе колхозсенче), пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăштах ÿстерме, мĕн пурĕ 1 мĕлйун та 991,2 пин гектар акма палăртнă. Уйрăм республикăсем тăрăх çĕрмамăкĕ акассине кăштах чакарма палăртнă.

Сахăр кăшманĕ 1938 çулта 1 мĕлйун та 184,3 пин гектар акмала. Сахăр кăшманĕ акмали лаптăка кăштах чакарнă пулсан, çĕр лаптăкне пăртаках чакарнине çак културăн тухăçлăхне нумай хăпартнипе витмеле.

Çак тăратнă планра ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Пĕрчĕлĕ тырăсен вăрлăхĕсене лайăхлатас ĕççем çинчен" йышăннă постановлени мĕнле пурнăçа кĕрет-ха?

Вăрлăхсене лайăхлатас ĕçре районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсем пит паха сыпăк пулса тăмала. Апла пулсан та республикăсем тата крайсемпе облăççем нумайрахăшĕ районри вăрлăх хуçалăхĕсене суйласа илессине тата Сойузăн Халăх Комиссарĕсен Советне çирĕплетме тăратассине пит вăраха йачĕç. Смоленск, Вологда, Свердловск облăçĕсем районри вăрлăх хуçалăхĕсен спискисене халĕ те-ха Сойузăн Халăх Комиссарĕсен Советне çирĕплетме тăратман.

Унсăр пуçне, районри вăрлăх хуçалăхĕсене валли агрономсене суйласа илесси те ытла пит вăрахăн пулса пырат.

Нумай крайсемпе облăççем, районри вăрлăх хуçалăхĕсене суйласа илнĕ чухне, акмали лаптăкне ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăтартса панă виçерен чылайах ÿстернĕ. Сăмахран, Свердловск облăçĕнче, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, районри вăрлăх хуçалăхĕсен планĕ 10 пин гектар пулмала. Облăçри организацисем ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен 25 пин гектар çирĕплетме ыйтаççĕ.

Районри вăрлăх хуçалăхĕсен акмали лаптăкне çавăн пек ниме пăхмасăр ÿстерни кирлĕ мар.

Государствă, районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсене туса, колхозсене пит пысăк пулăшу пачĕ. Çĕрĕç органĕсен анчах мар, облĕçтăвкомсемпе крайĕçтăвкомсен те, республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсен те кашни районри вăрлăх хуçалăхĕн ĕçĕсене пĕлсе тăрса, вĕсене татăклăн йертсе пымала. Асра тытас пулат—районри вăрлăх хуçалăхĕсене тăвассине пурнăçа кĕртменни—кашни тĕлтех—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Вăрлăх ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен" панă кăтартусене пурнăçа кĕртессине сахалтан та пĕр çулталăка кайа хăварат.

Тепĕр ыйту—чылай облăççенчен унта сăтăрçăла сарнă суртсене хĕстерсе кăларса, вĕсем вырăнне урăх суртсем сарасси.

Сойузăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ суртсене крайран крайа кÿрессине планлас тĕлĕшпе пысăк ĕççем туса иртернĕ. Кăçалхи çул пирвайхи хут суртлă тырпулсем акассине суртсем тăрăх планланă, суртсене куçарассине пурне те вырăнсенчи йертсе пыракан органсемпе килĕшсе тунă. Вырăнсем ыйтнине епĕр пĕтĕмпех парса çитерейместпĕр, анчах правителствă йышăнни малала пысăк утăм тума май парат.

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

Çĕрĕç органĕсенчи сăтăрлăхăн сийенĕсене хăвăрт тата вĕçне çитийех пĕтермеле

Çĕрĕç органĕсем халхи вăхăтри ĕçĕ çинчен каласа çакна йышăнас пулат:—Сталин йулташ партин XVII-мĕш сийесĕнче çĕрĕç аппаратне критиклесе калани çĕрĕçĕнчи работниксене пайанхи кун та пĕтĕмĕшпех пырса тивет-ха.

Çĕрĕç аппарачĕсенче, уйрăмах хал ĕнтĕ, парти организацисем çĕрĕç органĕсене пултарулă çынсене çĕнĕрĕн нумай панă хыççăн, лайăх работниксем сахал мар. Анчах епĕр çав йулташсене çĕрĕç органĕсем умне лартнă конкретлă задачăсене пурнăçа кĕртме кирлĕ пек мобилизацилеме пултарайман-ха. Тĕвĕсем çыха-çыха салтни—çаплах-ха пирĕн ĕçĕн стилĕ пулса тăрат.

Çĕрĕç органĕсем йапăх ĕçленине кăтартса пама тракторсемпе мĕнле усă курнине кăтартса паракан цифрсенех илме пулат. Чылай МТС-сенче 1937 çулта вăтамран илсен пĕр тракторпа ĕçлени (сухалани çине куçарса шутласан) пĕр пин гектартан ытла пулнă, Сойуз тăрăх çав вăтамран илсен ĕçлени—пурĕ те 440 гектар анчах пулат (1937 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшне малтанласа шутласа тухни тăрăх).

Тракторсемпе тăвакан ĕççене тума ларакан хака чакарассишĕн пĕртте кĕрешменни, çунтармалине ытлашши пĕтерни çине тÿсме çукла пăхни, МТС-сен финанс хуçалăхĕ çине айапламаллах тимсĕр пăхни—çавă вăл халĕ пур çĕрте те пурха, çавна пула епĕр нумай мĕлйун тенкĕ сухататпăр.

Нумай облăççемпе крайсен тата республикăсен работникĕсем Çĕрĕç Халăх Комиссариатне çунтармалисен нормине ÿстерттерме тăрăшаççĕ, çавна вĕсем—тарăнрах сухалас пулат, тесе сăлтавлаççĕ. Нумай районсенче чăннипех тарăнрах сухаламала, анчах çавна епĕр çунтармалин нормине ÿстермесĕрех тума пултаратпăр. Çакна асра тытмала,—епĕр çунтармалине пит нумай ахалех сайа йаратпăр-ха çакна каласан та çитмеле,—карбуратора регулироват туманнийех çунтармаллин расходне 10 процент хăпартат. А вĕт тракторсен чылай пысăк пайĕ, ытларахăшĕ темеле, йапăх регулироват тунă карбураторсемпе ĕçлеççĕ. Тракторсем ĕçленĕ чухне вĕсем хыççăн уйра тĕтĕм пĕлĕчĕ йавăнса пырат. МТС-сен пĕтĕм нефт хуçалăхне калама çук хуçасăрла тытса тăраççĕ.

МТС-сен нефт хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке тумала, тракторсемпе тăвакан ĕççене тума ларакан хака чакарассишĕн кĕрешÿ сарса йамала.

Йалхуçалăхне троцкисла-бухаринла сăтăрçăсем пысăк сийен кÿнĕ. Çĕрĕç системи калама çук çÿпĕленнĕ пулнă. Партин тата халăхăн хайар тăшманĕсем çĕрĕç аппарачĕн чылай сыпăкĕсенче йава çавăрнă. Çĕрĕç органĕсене сийенленĕ сăтăрла елементсен контрреволюцилĕ ишĕлтерÿлĕ ĕçĕ, пуринчен малтан, кадрсене пăсса пĕтерес йенпе пулса пынă.

Çĕрĕç органĕсенчен ытларах йапăх, дисциплинăсăр системă пулма пултарассине чухласа илме те йăвăр. Иртнĕ вăхăтра кооперацин йапăх ĕçлекен органĕсем çинчен „кооперативла саламла" ĕçлеççĕ тесе калаччĕç пулсан, хал вара çĕрĕç системи тĕлĕшпе çапла каламала пулат,—вăл йапăхлăх йенпе кооперацин чи начар органĕсенчен те мала иртсе кайнă.

Государствă МТС-сене тытса тăма пит нумай укçа-тенкĕ пĕтерет, паллах ĕнтĕ, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çав укçа-тенкĕ мĕн ĕçе тата мĕнле кайса пынине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмала. Çавна йурийех тусса пыман, çавна туманнипе рвачла, государствăна хирĕçле елементсене тата тÿрремех сăтăрçăсене хавхалантарса пынă, Йулашки икĕ çул хушшинче Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пĕр МТС-не те ревизи туман.

Халăх тăшманĕсем, саккунсăр тĕрлĕрен пособисемпе „премисем" парса çынсене сутăн илме те чарăнса тăмасăр, кадрсене пăсса пынă.

Кадрсене пăсни чылай чухне каламала çук намăссăрлăх патнех çитнĕ. Сăмахран, Тĕштырă тĕп управленин ремонт пайĕн инспекторĕ Косилов, Челабинск облăçĕнчи çĕрĕç пайне тĕрĕслеме йанăскер, Челабинск облăçĕн ĕçтăвкомĕпе çĕрĕç пайĕнчен „лайăх тĕрĕсленĕшĕн преми"—1600 тенкĕ укçа тата ковйор илнĕ.

Тăшманла елементсем ăслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсене йалхуçалăхĕ умĕнче тăракан практикăлă задачăсене татса парас ĕçрен пур майпа та пăрса пынă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн системинче тĕрлĕрен ăслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсем çĕршер пур. Вĕсенчен нумайĕшĕ йалхуçалăхне хăпартассипе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăман ыйтусене татса пынă.

Йалхуçалăх Ăслăлăхĕсен Ленин йачĕпе тăракан Академин институчĕсен системи йалхуçалăхĕнче ăслăлăх ĕçĕсене тума йулашки виçĕ çул хушшинче государствă укçине 200 мĕлйун тенкĕ йахăн пĕтернĕ. Çав укçаран сахал мар пайне ахалех, вырăнсăр салатса йанă. Сăмахран, Академи 1932 çултанпа çакăн пек темăсене тĕпчесе вĕренсе пынă: „Тĕрлĕ йахлă йытăсемпе усă курасси", „Йытăсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерессин техники", „Йутçĕршывсенчен кÿрсе килнĕ аçа йытăсен йăхне регистрацилесси". Йытăсем тĕлĕшпе тăракан çак мĕнпур ыйтусемшĕн пĕр 1936 çултах 100 пин тенке йахăн пĕтернĕ. Академин тематикинче „Тилĕне килте усрама хăнăхтарасси" йатлă темă та пулнă. Çаксем вĕсем пурте Лапутари академиксене, пĕтĕм королевствора çара тирлĕ сурăхсем ĕрчетес ыйтăва тĕпчесе вереннĕскерсене, питех те аса илтереççĕ.

Сăтарçăла елементсем темиçе çул хушши тырпул тухăçне хăпартассине чăрмантарса, тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвассине пăсса пынă.

Сойузăн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне кĕрсе кайнă сăтăрçăсем, пусуçаврăнăшĕсем тĕлĕшпе сăтăрланине пытарма, колхозсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕн çирĕплетнĕ пусуçаврăнăшсем пур тесе суйа сведенисем тăратнă. Ку вăл пусуçаврăнăшĕсем тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăнине тĕрĕссипе пĕртте кăтартса памаст.

1937 çулхи октăбĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, оперативлă учот сведенийĕсем тăрăх, 51.677 колхозăн анчах пусуçаврăнăшĕсем пулнă, вăл мĕн пур колхозсен хисепĕнчен 21,2 процент пулат, çитменне тата ку колхозсенче те чылайĕшĕнче пусуçаврăнăшĕсене, колхоз производствине аталантарса пымали условисемшĕн йурăхлă мар пирки, улăштарас пулат.

Колхозсене ĕмĕрлĕхе усă курма çĕр пани çинчен государствă актине парас ыйту тĕлĕшпе те çавăн пекех улталаса тăнă.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсене государствă актине парса 400 мĕлйун гектар çĕр ĕмĕрлĕхе усă курма çирĕплетсе панă пек кăтартакан сведенисем тăратнă. Тĕрĕссипе 1937 çулхи октăбĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствă актисемпе 312 мĕлйун та 99 пин гектар анчах çирĕплетсе панă. Тата, тĕрĕслесен, çав актсенчен 10 процентĕнчен сахал мар сăтăрла майпа пани, вĕсене улăштарма кирли курăнчĕ. Панă актсенчен 20—25 процентне чылайах тÿрлетмеле килет. Киров облăçĕнче, тĕслĕхрен, йатарласах тĕрĕслесе пăхсан курăнни тăрăх, актсен 26 процентĕ пĕтĕмпех брак, тата 48 процентне чылайах улăштармала.

Сăтăрлă ĕççем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе уйрăмах ишĕлтерÿлĕ пулнă. Çав сăтăрлăха пула социалисăмла вылăх-чĕрлĕх ĕрчетесси пысăк сийен курнă.

1934 çулта ПСК(б)П Тĕп Комитет Пленумĕ йышăнни тăрăх Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, колхозсен вылăх-чĕрлĕх таварлă фермисене валли ăратлă вылăхсем ĕрчетме, ăратлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекен совхозсене чылайĕшне панă. Çав ăратлă вылăх-чĕрлĕх совхозĕсене тытса тăма виçĕ çул хушшинче государствă бÿджетĕнчен 133 мĕлйун тенкĕ ытла расход кăларнă. Çав вăхăтрах ăратлă вылăх-чĕрлĕх совхозĕсен хисепĕ 82-рен 70 анчах йулнă, вĕсенче майракалă шултра вылăх-чĕрлĕхсен хисепĕ 50 пин пуçран 40 пин пуç çеç йулнă.

Аратлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекен чылай совхозсенче вылăхсене тĕрлĕрен чирсем йернĕ, çав вылăхсене колхозсене пани чăннипе илсен йерекен чирсем сарни пулса тăнă.

Сăтăрçăла елементсем йурийех çакăн пек туса хунă,—йалхуçалăхне машинсемпе тракторсем кÿрсе килни çулленех ÿссе пынă çĕртех, вĕсене ремонт тумали никĕс çаплах пĕчĕкех йулнă.

Халхи вăхăтра Сойузра 5819 МТС пур, а мастерскойсем 3731 анчах, вăл хисепрен капиталнăй ремонт тумали мастерскойсем 1200. Çапла ĕнтĕ, 2088 МТС-сен ремонт тумали нимĕнле никĕс те çук. МТС-сен тата МТМ-сен 18337 станок çеç пур. Аплатăк, МТС-семпе МТМ-сенчи пĕр станок пуçне тивет: 45 трактор, 15 автомашинă, 14 комбайн, 13 молотилкă.

Сталин йулташ партин XVII-мĕш сийесĕнче тракторсене ремонт тăвас ĕçре тĕп вырăнта, капиталнăй ремонт тăвасси мар, кулленхи тата вăтам ремонт тăвасси пулмала, тесе кăтартса пачĕ. Çĕрĕç аппарачĕсенче сийенленĕ сăтăрçăсем кулленхи тата вăтам ремонт тăвас ĕçе организацилессине пур майсемпе те аркатса пынă. Кулленхи ремонт хакне йурийех пит пĕчĕккĕ палăртса хунă пулнă.

Сăмахран, 1935 çулта Сойуз тăрăх кулленхи ремонт çемçе суха тунă кашни гектар пуçне 1 тенкĕ те 44 пуса ларнă. Çав ремонта тума 1936 çулта çемçе суха тунă кашни гектар пуçне 1 тенкĕ те 24 пус тухнă. А Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 1937 çулта кулленхи ремонта çемçе суха тунă кашни гектар пуçне 52 пуслăх тумала, тесе пройект йышăннă.

Тăшманла елементсем машин сарайĕсем тăвас ĕçе пур майпа та аркатса пынă. Çавна пула нумай МТС-сенче пит хаклă машинсем уçă çĕртех ларнă.

Çĕрĕç аппарачĕсене кĕрсе ларнă тăшмансен ишĕлтерÿлĕ ĕçĕсем çак каланисем анчах мар пулнă. Çĕрĕç работникĕсен задачи—парти организацийĕсем йертсе пынипе, сăтăрлăх сийенĕсене хăвăрт тата вĕçне çитийех пĕтересси пулат.

Сăтăрлăх сийенĕсене пĕтермели чи паха сыпăк çураки кампанийĕ пулса тăрат. Çитес çураки кампанинче çĕрĕç работникĕсем пурте парти умĕнче—социалисăмла йалхуçалăхне малала хăпартас, унăн организацилĕхне лайăхлатас тĕлĕшпе пирăн умма лартнă пысăк задачăсене пурнăçа кĕртме пĕлес йенпе—екзамĕн тытаççĕ.

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Р. И. ЕЙХЕ йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитет Пленумĕнче 1938 çулхи йанварĕн 18-мĕшĕнче тунă доклад

(Йулашки)

Уйрăмăн илсен, хуратăпралăмар тăрăхра „Лутесценс 062" текен çурхи тулă акассине 700 пин гектар ытла ÿстерме, тата çав вăхăтрах „Цезиум 0111" текен тулă акассине 300 пин гектар чакарма палăртнă,—çав тулă вăл хуратăпралăмар тăрăхра усăллăн йурăхсăр.

Тепĕр сыпăк—вăл суртлă вăрлăхсен пуçтарнă фончĕпе, пĕтĕмпех тата тĕрĕс усă курасси. Епер 1938 çулхи çуркунне суртлă вăрлăхсемпе 33—35 мĕлйун гектар акса хăварма пултаратпăр, вăл ĕнтĕ пĕтĕм çуркунне аки планĕн 60—64 проценчĕ пулаť (пĕлтĕрхи çул суртлă вăрлăхсемпе 20 мĕлйун та 200 пин гектар акнă пулнă).

Анчах суртлă вăрлăхсемпе акмалли çав, плана тултарма вăрлăхсене улăштарас ĕçе вăхăтра тата пĕтĕмпех туса çитерес пулаť.

Йалхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсен планне Сойуз тăрăх та, тата пур облăçсемпе крайсем тата республикăсем тăрăх та çирĕплетнĕ.

Партипе советсен вырăнсенчи организацийĕсен тата çĕрĕç оргăнĕсен задачĕ—çак плана районсемпе колхозсене вăхăтра та тĕрĕс çитерсе парасси, йединоличниксене заданисене тĕрĕс çитерсе парасси пулаť.

Пирĕн ĕнтĕ йединоличниксен секторĕ пысăк мар, анчах ун çине çавăрăнса пăхмала.

Иртнĕ çулсенче вырăнсенче плансем кăтартса парас ĕçе механически тунисем те сахал мар пулнă. Сăтăрçăла елементсем çавăнпа планировани ĕçне пăтратса йама, колхозсене аркатма усă курнă.

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне тунă чухне вырăнсенчи йертсе пыракан организацисен кашни колхозăн конкретлă ăрасналăхĕсене пурне те хисепе илмеле, тунă тата тăвакан пусуçаврăнăшĕсене хисепе илмеле.

Ак çакнă уйрăмах астумала—çакăн пек пит паха, ĕççыннисен пит пысăк массисен интересĕсенĕ таччăнах пырса тивекен ĕçе тунă чухне,—плана колхозсемпе совхозсене çитерсе парасси çавăн пек ĕç пулса тăраť,—ниме пăхмасăр администрацилени, колхозниксен сĕнĕвĕсемпе кăтартăвĕсене тата ыйтăвĕсене шута хуманни ан пултăр. Райĕçтăвком президиумĕсен ларăвĕсенче плансене çирĕплетнĕ чухне, вĕсен планĕсене, çирĕплетекен колхозсен председателĕсем обйазателљнă пулмала.

Плана тултарма кирлĕ условисене пурне те тунă

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне тултарма кирлĕ условисене пурне те тунă. Колхозсем кăçалхи çула иртнĕ çулта вăйлă тырпулпа йанах пуйан опытпа кĕресçĕ.

Правителствă йалхуçалăхне механизацилессипе малала аталантарса тата çирĕплетсе пыма пит пысăк укçа-тенкĕ пачĕ.

1938 çулта çĕнĕрен 500 МТС организациллессĕ.

1938 çулта йалхуçалăхне паракан тракторсен пĕтĕм вăйĕ 1 мĕлйун та 138 пин лаша вăйĕ чухлĕ пулаť (иртнĕ çулта 934 пин лаша вăйĕ чухлĕ пулнă).

Кăçалхи çул МТС-сене пуринчен ытла гусеницăлă тата дизел-моторлă хăватлă тракторсем параççĕ.

Йалхуçалăхне СТЗ тата ЧТЗ тракторсене—15 500 штук, ЧТЗ „С—65" тракторсене—10 пин штук параççĕ (иртнĕ çулта ЧТЗ тракторĕсене 2.140 анчах панă).

Дизеллĕ „С—65" трактор çинчен уйрăмах асăрхаттаратăп, вăл карбураторлă моторпа ĕçлекен трактортан нумай пахараскер.

„Сталинец—65" хутлăн йапаласемпех ĕçлет, вăл нефтран 70—80 процент йуниерех ларать.

Лигроинпа ĕçлекен ЧТЗ пĕр гектар сухалама 17—19 килограм горючи пĕтерет пулсан, дизеллĕ трактор 10—12 килограм анчах, урăхла каласан, 35 процент сахаллрах пĕтерет.

МТС-сем умĕнче пысăк задач тăрать, вăл çав пит ыра трактора хăварт алла илсе ĕç кĕртесси.

Йалхуçалăхне çĕрĕе ĕçлесе çемçетмелли машинăсем çителĕклĕ парасси çине уйрăмах çавăрăнса пăхнă. Вăл кăкарса ĕçлемелли инвентарсем, уйрăмах трактор плугисем, култиваторсем тата уйра ĕçлемели лушчиљниксем, çителĕклĕ пулманнине пĕтерме кирлинчен тухса тăраť. Промышленнăçа 65 пин култиватор тума заказ памала пулаť, (иртнĕ çулта 43.500 штук тума заказ панă пулнă).

1938 çулта тырпула тасатмали машинсем туйанма укçа-тенкĕ хывни пысăккăн ÿсет. Çав машинсене 33 мĕлйун та 657 пин тенкĕлĕх, урăхла каласан, 1937 çулхинчен виçĕ хута йахăнах нумайрах туйанма палăртнă. 3—4 корпуслă трактор плугисене йалхуçалăхĕ 9700 штук илет (иртнĕ çулта 35 926 илнĕ). Пуринчен ытла пилĕк корпуслă трактор плугисене илме палăртнă. Çавăн пек плугсене 72 500 илмеле (иртнĕ çулта 42.381 илнĕ).

Халĕ механизаци тĕлĕшпе тĕп задачă—йалхуçалăхĕнче пур пек йышлă тракторсемпе машинсене йĕркелесе çитересси, вĕсемпе усă курассине ÿстересси, тракторсемпе тăвакан ĕçсене тума ларакан хака чакарасси пулаť.

Машинсене тискерле тыткаланине пĕтермеле. Çавна, чи малтан, комбайнсемпе усă курас тĕлĕшпе тумала, вĕсем часчасах икĕ çул йе виçĕ çул ĕçленĕ хыççăнах стройран тухаççĕ. Çавă вăл комбайна час-часах, кивĕ урапана пăрахнă пек, усă çĕртех хĕл касма хăварнăран килет.

Партипе правителствă кăçалхи çул, иртнĕ çулсенчи пекех, колхозсене çĕнĕ машинсемпе пит пысăк пулăшу параççĕ.

Вырăнсенчи хăшпĕр йулташсем çĕнĕ МТС-сем тата нумайрах тума ыйтрĕç. Ыйтнă чухлех тăвас пулсан, сахалтан та 1 пин çĕнĕ МТС тума палăртса хумала пулнă пулĕччĕ.

Кăçалхи çул ремонт ĕçне лайăхлатма, ремонт никĕсне вăйлатма укçа-тенкĕ пани иртнĕ çулхинчен икĕ хута йахăнах ÿсет, çав ĕç валљи паракан укçа-тенкĕ 64,1 мĕлйун тенкĕ пулаť.

Вырăнсенчи партипе совет организацийĕсем, çавăн пекех тата çĕрĕç оргăнĕсем пурте ремонт ĕçĕн никĕсне çирĕплетме чăннипех кирлĕ пек тытăнсан, ку ĕçре çак çултах вара пысăк утăм тума пулаť.

Халиччен ĕçленĕ машинă-трактор мастерскойĕсенче, çавăн пекех çĕнĕ мастерскойсенче те, пуринчен ытларах станоклă оборудованисем çине çавăрăнса пăхмала.

Çуракине вăхăтра тата лайăх хатĕрленмеле

ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленире çуракине хатĕрленес ĕç пачах çителĕксĕр пулса пынине, чи кирлĕ те халех тумалли ĕçсем—вăрлăх хывассипе тасатасси, тракторсене йусасси, горючисене турттарасси тата вăрлах улăштарасси пурнăçа кĕрес мар хăрушлăх умĕнче тăнине кăтартса панăччĕ.

Çак çулта тырпул лайăх пулни хăшпĕр крайсенче лăпланса тăма май пачĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçе организацилеме вирлĕн тытăнас вырăнне, çав ĕçе хăй йуххипе йанă.

Çавăн пек лăпланса тăни пит хăрушă. Çакна та шута илмеле: кĕрсухи планне кăçал тултарайман. Çавăнпа та ун вырăнне çуркунне сухалас ĕç пысăк пулаť.

Иртнĕ çулта çуркунне сухаламали 25.513.000 гектар пулнă. Çак çулта—29.424.000 гектар.

Трактор паркне йусас ĕç пит йерипен пыни те нумай шухăшлаттараť.

1938 çулти йанварĕн 10-мĕшне сойуз тăрăх пурĕ 73.223 трактор йусанă, планран шутласан вăл 30 процент пулаť. Ку пит сахал процент. Плана пĕтĕмпех тултарса çитерме халиччен йусанисĕр пуçне тата 173.473 трактор йусамала.

Тракторсене йусас ĕçе пуринчен ытларах кăнтăр йенчи республикăсен, крайсемпе облăçсен—çуракине малтан тухакан вырăнсен хăвăртлатма кирлĕ. Ростов облăçне илер. Ку облăçра плана мĕн пурĕ те 19 процент çеç тултарнă: Таджик ССР—16 процент; Узбек ССР—24 процент; Николаевск облăçĕнче—35 процент; Одесса облăçенче—24 процент; Орджоникидзе крайĕнче—36 процент; Днепропетровск облăçенче—49 процент тултарнă. Кăнтăр йенчи крайсен, облăçсен, республикăсен, çуракине чи малтан тухакан вырăнсен, тракторсене йусас ĕçе чи малти вырăнта тăракан ĕçе тытăннă пек тытăнмала.

Ытти республикăсенчен, крайсемпе облăçсенчен, çуракине кăшт кайарах тухаканнисенчен, ремонт ĕçне пуринчен ытларах çаксен хăвăртлатмала: Калинин облăçĕ, тракторсене йусамали плана пĕтĕмпе те 8 процент çеç тултарнă, Тутар АССР—14 процент çеç тултарнă.

Ремонт ĕçне хăвăртлатассинче татăклă улшăну тăвас тесен, МТС-семпе МТМ-сенче организаципе техникă йенчен пыракан йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтерме кирлĕ. Чи малтанах ĕçе организацилессипе ремонт ĕçĕшĕн тÿлес йĕрке çине çавăрăнса пăхмала, çавăн пекех тата ремонт ĕçĕнче ĕçлекен рабочисемпе трактористсен пурнăç условийĕсене лайăхлатмала.

Икĕ йе виç сменăпа ĕçлессине организацилесе мастерскойсенчи оборудованисемпе туллиййĕн усă курмала. Сменăпа ĕçлесси мастерскойсенче халиччен çук-ха.

Чылай облăçсемпе крайсем тата республикăсем запаслă пайсене план тăрăх йарса тăма ыйтаççĕ. Çапла ыйтни вăл саккунлă тесе шутлама пулаť. „Глававтотрактородеталь" хăшпĕр кирлĕ пайсене вăхăтра йарайманăр правителствă панă графика тултарса пыраймасť. Анчах та, ремонт ĕçĕ халљхи пек кайа йулса пыни çавăнтан килет теме çук. Вырăнсене халиччен йанă пайсем те ремонт ĕçне чылай хăвăртлатма май параççĕ.

Вырăнсенчи хăшпĕр работниксем капиталљнăй ремонт планне ÿстерме ыйтаççĕ. Çапла ыйтни нумай вырăнсенче нимĕнпе те çирĕпленмест. Ăна çак факт та кăтартса параť,—ремонт планне 8—10 процент çеç тултарнă хыççăн плана ÿстерме ыйтаççĕ пулсан, ĕç çавăн пек чухне капиталљнăй ремонт планне ÿстерме кирлĕ йе кирлĕ марри çинчен татса калама йавăр. Çакна та асăрхамала: хăшпĕр МТС директорĕсем вăгам ремонтран хăтăласшăн, тракторсене пурне те капиталљнăй ремонт витĕр кăларасшăн тăрăшаççĕ, вăтам ремонт МТСтанцин хăйĕн укçа-тенкинчен пулмала, капиталљнăй ремонт—Сойуз бÿджетĕнчен пулаť. Хăшпĕр МТС директорĕсен йенчен палăракан çавăн пек государствăна хирĕçле шухăшсене татăклăн çапса хуçмала.

Ремонт ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслесе тăрасси çине уйрăмăнах пăхмала. Чылай машинă-трактор мастерскойĕсенче тракторсене йапăх йусани çинчен пĕлтерекен сигналсем сахал мар пирĕн. Çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пынине тата çав ĕçе организацилеме пулăшма вырăнсене кайнă Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн работникĕсем тракторсене мĕнле йусанине йатарласах пахалăх йенчен тĕрĕслесе пăхнă. Çав тĕрĕслÿ çинчен епĕр илнĕ пĕлтерÿсем пире ĕç пахалăхĕ йенчен пĕртте лăплантараймаççĕ. Йусаса çитернĕ тесе шутланакан чылай тракторсен пысăк çитменлĕхсемех палăрнă.

Горючисене турттарса хатĕрлес ĕç пит йерипен пыни те пире чылай шухăшлаттараť. Тĕслĕхрен, Ростов облăçĕнче Главнефт базинче 13 925 тоннă крассин турттармасăр выртаť. Лимит 6 пин тоннă илме панă, анчах 10 кун хушшинче 499 тоннă çеç турттарнă.

Главнефт базинче 3.865 тоннă лигроин пур. 1.500 тоннă илме лимит панă пулсан, 236 тоннă çеç турттарнă.

Краснодар крайĕнче те тата чылай ытти облăçсенче че çавăн пекех.

Чылай районсем горючи илме тата тракторсене йусама запаслă пайĕсене илме укçа-тенкĕ çук теççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем дебиторсенчен пухмали укçа-тенке пухас тĕлĕшпе кирлĕ таран ĕçлемеççĕ.

Тĕпком Пленумне çакăн çинчен те каласа памала: дебиторсенчен пухмали укçа-тенкĕ пит пысăк, 1937 çулти октаберĕн 1-мĕшне 900 мĕлйун тенкĕ таран пулнă пирки, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн укçатенкĕ хушса пама Сталин йулташпа Молотов йулташран ыйтмала пулчĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пире пит пысăк пулăшу пачĕç: финанс планĕ çумне хушса Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата 120 мĕлйун тенкĕ панă.

Чылай МТС директорĕсемпе крайсенчи тата облăçсенчи çĕрĕç пайĕсен начаљникĕсем йенчен пулнă государствăна хирĕçле практикăна тĕп тумала. Обкомсем, крайкомсем, нацилĕ компарти Тĕпкомĕсем пысăк пулăшу парса тăрсан çеç Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çав задачăна пурнăçа кĕртме пултараť.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăтартса панă хыççăн чылай республикăсенче, крайсенче, тата облăçсенче дебиторсенчен шыраса илес тĕлĕшпе йулашки вăхăтра кирлĕ пек резултатсене тунă. Тĕслĕхрен, октаберпе декабер хушшинче Туркменире дебиторсенчен пухмали укçана 91 процент пухнă, Киргизире — 82,9 процент, Донецк облăçĕнче—81,7 процент, Кăнтăр Казакстан облăçĕнче—82,7 процент.

Анчах та, пĕтĕм Сойузĕпе илсен çав ĕç çителĕксĕр пулса пыраť. Пуринчен ытларах Башкири йулса пыраť, дебиторсенчен пухмали укçа-тенкĕрен кунта мĕн пурĕ те 33 процент çеç пухнă, халљ кунта пухмали татах 10.290 пин тенкĕ йулаť. Орлов облăçĕ 37,6 процент пухнă, халљ пухмали 8.732 пин тенкĕ йулаť. Ростов облăçĕ 41,8 процент пухнă, тата 1.434 пин тенкĕ пухмали йулнă.

Дебиторсенчен укçа-тенкĕ пухас ĕç йапăх пыракан облăçсемпе крайсен списки чылайах пысăк, чылай вырăнсенче, хăшпĕр колхоз председателĕсен рвачла, государствă шучĕпе пуранас шухăшĕсене хирĕç татăклăн кĕрешни çук.

Ростов облăçĕнче хăшпĕр уйрăм работниксем дебиторсенчен укçатенкĕ пухса çитерессине хирĕçле ĕçлесе пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Песчано-Окопски районра Песчано-Окопски МТС совечĕн ларувĕнче ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн представителĕ—дебиторсенчен укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕншĕн йапăх пыраť, тесе ыйтнине хирĕç райĕçтăвком председателĕ Ротиков çапла каланă: „Пирĕн колхозсене государствăран пулăшу кирлĕ". Çав вăхăтрах, çав МТС ĕçлесе тăракан колхозсенче пĕр ĕçкунĕ пуçне 7—10 шар килограм тыра валеçеççĕ. Ĕçлеме пултаракан пĕр çын пуçне 120 пăтран пуçласа 600 пăта çитиччен тырă тивет. 20 колхоз автомашинăсем илнĕ.

Машинă-трактор станцисен финанс хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке туса çитермеле, рвачла шухăшсем кăшт палăрнине те татăклăн çапса хуçса пымала.

Вăрлăхшăн болљшевикла тăрăшмала

Çураки ĕçĕнче вăрлăх татса паракан вырăнта тăраť.

Вăрлăх хывас ĕç Сойуз тăрăх çителĕксĕр пыраť. 1938 çулти йанварĕн 1-мĕшне Сойуз тăрăх тĕштырăсемпе пăрçалă тырăсене 87 процент хывнă пулнă. Пуринчен ытла вир вăрлăхĕпе пăрçалă културăсен вăрлăхне хывас ĕç йапăх. Вир вăрлăхĕ хывмали плана 71 процент, пăрçалă културăсен вăрлăхне—55 процент çеç тултарнă.

Дагестан АСС Республикинче вăрлăхсене хывас ĕç пур културăсем йенĕпе те чăтма çук йапăх пыраť. Кунта пĕтĕм плана 48 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех Чечено-Ингуш АСС Республикинче—44 процент, Тамбов облăçĕнче—68 процент, Мари АСС Республикинче—53 процент, Калмык АСС Республикинче—27 процент, Красноярск крайĕнче—44 процент, Иркутск облăçĕнче—29 процент çеç тултарнă.

Çавăнпа пĕрлех, чылай республикăсем, крайсем тата облăçсем, облăç йе край тăрăх пĕтĕмпе илсен, вăрлăхсене хывса çитернине йе хывса çитерме çывхарнине те палăртма кирлĕ. Анчах та, вăрлăх хывман районсем те чылай. Тĕслĕхрен, Куйбышев облăçĕнче вăрлăх хывмали пĕтĕм плана 97 процент тултарнă, çавăнпа пĕрлех вăрлăхсене 20—30 процентран ытла мар йе унтан та кайарах хывнă колхозсем те чылай.

Ытти чылай крайсенче те ĕç çавăн пек тăраť. Ĕç çавăн пек тăни вăрлăхсене хывнине кашни колхоз тăрăх тĕрĕслеме хушаť. Вăтам виçе çине пăхса лăпланса лармала мар, çитес кунсенче кашни крайра, облăçре, республикăра хăйĕн пĕтĕм çĕр лаптăкне акмалăх вăрлăх хывса çитерейменни пĕр колхоз та йулмала ан пултăр тесе ĕçлемеле.

Вăрлăх улăштарас ĕçе пит йапăх организациленĕ. Суртлă вăрлăх улăштарса илес ĕç чăннипе пуçланман та. Суртлă вăрлăхсене колхозсем хушшинче улăштармали плана мĕн пурĕ те 10 процент çеç тултарнă.

Госсортфонд йенĕпе вăрлăх улăштарас ĕç татах та йапăх пыраť. Госсортфонд йенĕпе çурхи тырă вăрлăхĕсене суртлă мар вăрлăхсемпе улăштарма 258.066 тоннă палăртнă пулсан, çак çулти йанварĕн 10-мĕшне мĕн пурĕ те 3757 тоннă çеç улăштарнă. Ку вăл 1,5 процент пулаť. Заготзерно йенĕпе çурхи тырăсен суртлă вăрлăхне суртлă мар тырăпа 850.133 тоннă улăштармала. Заготзерно йенĕпе вăрлăх улăштарас ĕç, чăннипе, пуçламан та.

Пирте организацилĕх çук пирки вăрлăх улăштарас ĕçсене пурне те вăхăтра туса çитерейменсен, ку вăл вара пысăк преступлени туни пулаť.

Вăрлăхсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа тасатасси çак çулта уйрăмăнах пысăк вырăнта тăраť. Анчах та, чылай облăçсенче вăрлăх тасатас ĕçе тытăнман та. Тĕслĕхрен, Омск облăçĕнчи Аромашевск районĕнче 29 колхозра вăрлăх тасатас ĕçе халиччен тытăнман. Трийерсем çитмеççĕ, теççĕ. Чăнахах та, трийерсем пур çĕрте те çителĕклех мар, çавăх та вăрлăх тасатмали майсем пур, çав майсене тупмала та. Чи малтанах, трийерсене çунасем çине лартса талăкĕпе ĕçлемеле тумала, тепĕр май, çаврака аласемпе аласа тасатассипе те усă курма кирлĕ.

Курăк вăрлăхĕсене хатĕрлесе хурасси çине пит тимлĕн çавăрăнса пăхмала. Тĕслĕхрен, çураки планĕ тăрăх, çак çулта колхозсен пурĕ 1.300 пин гектар љуцернă акмала. Çавăн чухлĕ лаптăк акма сахалтан та 130 пин центнер вăрлăх кирлĕ.

Складсенче пуррипе вăрлăх фончĕ шучĕпе хывнă запас мĕн пурĕ те 960 пин гектар акмалăх йе планпа пăхнинчен 75 процент акмалăх çеç. Љуцернă вăрлăхне татах 340 пин гектар çине акмалăх хатĕрлемеле.

Çĕрмамăкĕ акса тăвакан районсенче љуцернă уйрăмăнах пысăк вырăнта тăраť. Çĕрмамăкĕ акса тăвакан республикăсен љуцернă вăрлăхне хăйсене валљи çеç мар, Сойузăн ытти районĕсене памалăх хатĕрлеме тивĕçли çинчен те асăрхамала. Анчах та, љуцернă вăрлăхне хатĕрлес ĕç çав республикăсенче пит çителĕксĕр пулса пыраť.

Çĕрмамăкĕ акса тăвакан чылай районсенче хăйсем акмали лаптăк çине акмалăх та љуцернă вăрлăхне хатĕрлесе çитереймен. Таджик республикинче љуцернă вăрлăхĕ 2346 центнер, Азербайджанра—860 центнер; Киргизире—2638 центнер тата Арменире 566 центнер çитмест.

Вăтам Азири республикăсенче љуцернă вăрлăхĕ пирки ĕç çавăн пек пулни çакăнтан килнĕ: љуцернă акнă вырăнсене пĕрремĕш тата иккĕмĕш хут çулнă чух утă валљи çулнă, вăрлăх тума виççĕмĕш хут çулма хăварнă, анчах виççĕмĕш хут çулнă тĕле вăрлăх пулса çитеймен йе пулса çитнĕ пулсан та пит сахал пулнă.

Клевер йенĕпе те ĕç çавăн йевĕрлĕ. 1937 çулта Сойуз тăрăх 566 пин гектар çинчен вăрлăхлăх клевер пуçтарса кĕртнĕ. Клевер çапас ĕçпе тĕшлес ĕç халљ те пĕтмен. Йанварĕн 5-мĕшне пĕтĕмпе 391 пин гектар çинчен пуçтарса кĕртнине çеç çапнă, ку вăл пуçтарса кĕртнĕ лаптăкран 69 процент пулаť.

Вăхăтра пуçтарса кĕртмен тата вăхăтра çапса тĕшлемен пирки клевер вăрлăхĕ тăвас ĕçре пит нумай тăкак пулаť. Гектартан 1,5 центнер илме шутланă вырăнне Сойузĕпе вăтам шутпа гектартан 58 килограм çеç тухаť. Ку вăл чăтма çук сахал тухăç.

Клевер вăрлăхне хывас тĕлĕшпе пуринчен ытларах çак облăçсем йулса пыраççĕ: Йарослављ облăçĕ, плана 22,1 процент тултарнă; Тамбов облăçĕ—25,1 процент; Рйазаљ облăçĕ—26,7 процент; Смоленск облăçĕ—27,2 процент; Курск облăçĕ—29,5 процент; Калинин облăçĕ—38,7 процент.

Колхоз руководителĕсене халљ çакна ăнлантарса çитерме вăхăт ĕнтĕ: љуцернăпа клевер вăрлăхĕ участкисене хăвармали плана тултарманни, клевере вăхăтра çапса тĕшлеменни пусуçаврăнăшсене йĕркене кĕртсе çитермесĕр хăварса, тырпул тухăçне чакараť, колхозниксен пурнăçне лайăхлатас ĕçе йавăрлатаť.

Йĕтĕн вăрлăхĕ тĕлĕшпе ыйту çивĕччĕн тăраť. Йĕтĕн акма палăртнă плана пурнăçа кĕртме 233 пин тоннă вăрлăх кирлĕ. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне колхозсенче 159 тоннă çеç хывнă.

Йĕтĕн вăрлăхне хывас ĕç, тасатса çуракине хатĕрлес ĕç уйрăмăнах çак облăçенче йапăх пыраť: Омск облăçĕнче, планпа пăхнинчен 30 процент çеç хывнă, вăл шутран 24 процентне тасатнă; Иваново облăçĕнче—37 процент хывнă, 24 процент тасатнă; Йарослављ облăçĕнче—22 процент хывнă, 13 процент тасатнă; Свердловск облăçĕнче—29 процент хывнă, 20 процент тасатнă; Кировск облăçĕнче—50 процент хывнă, 24 процент тасатнă, Вологда облăçĕнче—53 процент хывнă, 7 процент тасатнă; Архангељск облăçĕнче—51 процент хывнă, 6 процент тасатнă.

Йĕтĕн вăрлăхне хывас ĕç йапăх пынăшăн епĕр çеç айăплă, мĕншĕн тесен çав ĕçре пирĕн йенчен кирлĕ пек йертсе пыни пулман. ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йĕтĕн вăрлăхне хатĕрлев планне тултаричченех хывма ирĕк панине пурте пĕлеççĕ. Çапла пулсан та, йĕтĕн вăрлăхне епĕр вăхăтра тата кирлĕ таранах хывса çитерме пултарайман.

Пйатисотницăсен йухăмĕ сахăр кăшманĕн тухăçне ÿстерессишĕн кĕрешес ĕçре пысăк çитĕнÿ турĕ. Анчах та, çĕрĕç оргăнĕсемпе вырăнсенчи партипе совет организацисем йенчен сахăр кăшманĕн тухăçне ÿстерессишĕн кĕрешессии вăйсăрланчĕ. Ăна чылай облăçсем план тăрăх сахăр кăшманĕ лартма палăртнă вырăнсене тарăн сухаламанни кăтартса параť.

Тĕслĕхрен, Одесса облăçĕнче, тарăн сухалама палăртнă плана 68 процент çеç тултарнă; Тамбов облăçĕнче—39 процент, Киргиз ССР—34 процент; Казах ССР—24 процент.

Çавна кăçал ĕнтĕ çĕре çемçетмелисене нумай хывнипе витмеле пулаť. Çитес çуркунне сахăр кăшманĕ лартмали вырăна 3.970 пин тоннă çĕрĕк тăпри кăларма кирлĕ, анчах çĕрĕк тăприне 723 пин тоннă çеç кăларнă. Çапла вара, сахăр кăшманĕ йенĕпе те ĕççем лăплантараймаççĕ, ĕçе тÿрлетес тĕлĕшпе халех кирлĕ ĕççене туса ирттерме кирлĕ.

* * *

Кайа йулнă ĕççене хăвăрт туса çитерес тата акана иртнĕ çулхинчен те лайăхрах хатĕрленсе тухас тесен, акана тухиччен йулнă кĕске срук хушшинче пурне те туса çитермеле.

Йалхуçалăхĕнче тунă пысăк çитĕнÿсене кура лăпланса ларни пулмала марри çинчен тата йалхуçалăха йертсе пырассинче, çĕрĕç оргăнĕсене çирĕплетес ĕç вăйсăрланмала марри çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти организацийĕсене асăрхаттарчĕ.

Анчах та ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ МТС-семпе çĕрĕç оргăнĕсене кадр тупса лартасси çинчен панă кăтартăва чылай крайсем, облăçсем тата республикăсем пит йерипен пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Белорус ССР Республикинче пурĕ 200 МТС, анчах çирĕплетнĕ директорсем 144 çеç. 24 машинă-трактор станцинче вăхăтлăха директор вырăнне лартнă çынсем ĕçлеççĕ. 12 станцире директорсем пачах çук.

Омск, Оренбург, Свердловск тата чылай ытти облăçсенче те ĕç çавăн пек.

Çав ĕçе халех тытăнса МТС-семпе районсенчи çĕрĕç пайĕсене тĕрĕслесе тухнă работниксем тупса пама ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ панă кăтартăва хăвăрт пурнăça кĕртсе çитермеле.

Çĕрĕç аппарачĕсене халљ чылай çĕнĕ çынсем ĕçлеме илнĕ. Вĕсене ĕçлеме лайăх услови туса памала, халлĕхе практикăла опыт çитеймен çĕнĕ работниксене конкретлăн йертсе пырса пулăшу памала.

1937 çулта епĕр 7 мĕлйард пăта йахăн тырпул пуçтарса кĕртрĕмĕр. Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илме лартнă задачăна пурнăça кĕртсе çитерме тăрăшса ĕçлесе, 1938 çулта пирĕн йалхуçалăх продукцине 1937 çулхинчен те ытларах туса илессишĕн ĕçлемеле.

Çав задачăна пурнăça кĕртме коммунистсене, колхозниксемпе совхозсен руководителĕсене, колхоз активне тата колхозниксемпе совхозсенчи рабочисен пĕтĕм массине мобилизацилемеле, 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕн планĕнчи конкретлă паллăсемшĕн ăмăртса ĕçлессине анлăн сармала.

В. И. ЛЕНИНА АСАНСА

Йанварĕн 21-мĕшĕнче Владимир Илйич Ленин вилни 14 çул çитнине асăнса Шупашкарти предприйатисенче, учреждениссенче, шкулсенче пур çĕрте те рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен, вĕренекенсен траурлă митингĕсем пулса иртрĕç. Хулари Академи театрĕнче Шупашкарти пĕтĕм ĕççыннисен траурлă пухувĕ пулчĕ. Кунта ПСК(б) Парти Обкомĕн секретарĕ Павлов йулташ В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Доклад пĕтнĕ хыççăн, Чăвашсен государствă хорĕ "Замучен тяжелой неволей", Сталин йулташа хисеплесе çырнă йурăсемпе оборонă йуррисене йурласа пачĕ. Академи театрĕнчи артиссем Владимир Илйич Ленин çинчен çырнă савăсене каласа пачĕç.

* * *

Шупашкар районĕнчи Çатра-Хучахматри туллмар вăтам шкулта В. И. Ленин вилнине асăнса траурлă лару пулса иртрĕ. Ларура В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пысăк доклад пулчĕ.

Шкулта В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен стена хаçачĕ кăларнă.

Вĕренекенсем пурте ленинисăмa тĕплĕн вĕренсе, Ленин кăтартнă пек вĕренме, ĕçлеме сăмах пачĕç.

Серебрйаков

ДЖОРДЖ ГОРДОН БАЙРОН

(Ҫуралнӑранпа 150 ҫул тултарнӑ тӗле)

Ҫӗр аллӑ ҫул каялла Лондонра акӑлчансен аслӑ поэчӗ Джордж Гордон Байрон ҫуралнӑ, унӑн творчестви пӗтӗм тӗнчери литература малалла ӳссе пырассине питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Байрон Европӑн историйӗн чи хӗрӳ тапхӑрӗсенчен пӗринче пурӑннӑ тата ӗҫленӗ. Франци пӗрремӗш революцийӗ, Наполеон вӑрҫисем тата „Священный Союз" реакцийӗ, Англири рабочисен луддитла йухӑмӗ, Ирландири, Испанири, Италири тата Грецири пусмӑрта пурӑнакан халӑхсен хушшинче нацилӗ-ирӗклӗх йухӑмӗ сике-сике тухни,—ҫакӑн пек пулнӑ Байрон ӗҫлеме пуҫланӑ историлле хайар тапхӑр.

Франци буржуалӑ революцийӗ Байрона тата унӑн современникӗсенчен нумайӑшӗн творчествине пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Пӗчӗкҫех, шкул ачи пулнӑ вӑхӑтрах, Байрон трибун, политикла активлӑ борец пулса хӗрӳлӗн ӗҫлеме ӗмӗтленет, анчах ӑшшӗнчен йулнӑ лорд титулӗн ырлӑхӗ ӑна ваҫҫӑн Англи парламенчӗн аслӑ палатине алӑк уҫса панӑ.

Ача чухнехи ҫак шанчӑка истори ултала. Байрон пурӑннӑ вӑхӑтра Англи Европӑри чи консервативлӑ ҫӗршывсен пӗринче тӑнӑ. Вӑл пулӑшнипе, хута кӗрсе пынипе реакцийӗ „Священный союз" Байрон куҫӗ умӗнчех Европӑна чӑн-чӑн „халӑхсен тӗрми" туса хунӑ. Пусмӑрти ҫӗршывсенче — Испанире, Италире, Ирландире—революцилле ирӗклӗх йухӑма сарма пӑхнине хайарӑн путарса лартнӑ.

Англире рабочисен йухӑмӗ ун малтанхи хут аталанма пуҫланӑ та ӗнтӗ. Анчах ун чухне рабочисен ҫапалӑнчӑк тата организациленмен пулнӑ. Рабочисем, пуринчен ытла, вӗсене производствӑран хӗссе кӑларакан тата выҫӑха хӑвалакан патне илсе пыракан машинӑсене ҫӗмӗрсе кӗрешнӗ.

Парламентра Байрон ҫав рабочисене—машинӑсене ҫӗмӗрекенсене, луддитсем тесе чӗннӗскерсене, тата пусмӑрти, праваҫӑр Ирландие хӳтӗлесе тухса каланӑ. Ирланди халӑхне пусмӑрлани ҫинчен, Англи рабочийӗсен хурлӑхлӑ пурнӑҫӗ ҫинчен тата Англи буржуазин ирсӗр ӗҫӗсем ҫинчен хайарӑн тӑрӑхласа каланӑ.

Байрон хӗрӳлӗн хирӗҫ тӑнӑ пулин те, Ирландине пусмӑрлӑха кӗртсе ӳкерекен саккунсем вайрах пулнӑ, машинӑсене ҫӗмӗрекенсене вӗлерме хушакан йунлӑ саккун проектне ӗҫе кӗртнӗ. Нумайах пулмасӑ Байрон парламентра хӑй вӑйлӑ политикла деятель пулнине кӑтартма ӗмӗтленнӗччӗ, анчах халӗ ӗнтӗ парламент Англири пусмӑрлакан классен представителӗсен пӗчӗк ушкӑнӗ кӑна пулнине, тата ҫак представительсем сутӑнчӑка, мӑшкӑлла ӗҫсем Англи халӑхӗн сарлака массисен интересӗсемшӗн тахҫанах тӑшман пулнине Байрон уҫҫӑнах курнӑ.

Англи общественӑлла стройӗн ситменлӗхӗсене тупса илнӗ пулин те, Байрон, ҫапах та, Англи общественне сывӑтма пултаракан хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗнчи общественлӑ вӑйсене курман. Експлоататорсене тата пусмӑрлакансене хирӗҫ ун ӑшӗнче хайар тарӑху вайланаххӑн та вайланаххӑн вӗресе тӑнӑ ҫемӗн, унӑн политикла шанчӑклӑх туйӑмӗ сивӗнсе пынӑ, вайсӑрлӑх тата пӗччевлӗх туйӑмӗ вайланса пынӑ.

Политикла сивӗнсе пырасси Байрон современникӗсен нумайӑшӗн пулнӑ. Анчах ҫапах та, Байрон хӑйне пӗрлисенчен ҫакӑнпа уйӑрӑлса тӑнӑ: вӑл хӑй видинчен унӑн пурнӑҫӗ общественлӑ ӗҫлесине, политикла кӗрешӗве пулмаллине курнӑ. Ҫав ӗмӗте пурнӑҫа кӗртме май пулманни Байрон творчествинче трагизма ҫаккусӗ пулнӑ тесе, тӗрӗссӗнех калама пулать.

Ҫак трагизмӑ Байронӑн поэзине произведенийӗсенче—питех те паха „Паломничество Гайльд-Гарольда" поэмӑра та вырӑн йышӑннӑ, ку поэмӑн малтанхи йурӑрисем чӑннипех те унчухнехи Европӑн поэзинче „тапхӑр туса хунӑ". Ҫавӑн пекех кайарах сырнӑ романтикла „хӗвелтухӑҫ" поэмисенче те—„Гяур", „Корсар", „Лара"—произведенийӗсенче те—ҫав трагизм хӑй вырӑнне йышӑннӑ. Ку произведенисенче поет вайлӑ та хӗрӳлӗ, анчах вӗҫӗ хӗррисӗр телейсӗр тата пӗччен, общественлӑ тата етемлӗхрен сивӗннӗ ҫынсен историйӗсем ҫинчен: общественлӑ тата таӑлса йулнӑ тата ҫапкаланса ҫӳрекен—Гайльд-Гарольд пек ҫапкаланчӑксем, Корсар пек вӑрӑ-хурахсен историйӗ ҫинчен сырнӑ.

Мӑнкӑмӑллӑ, вайлӑ тата пӗччен геройсем ҫинчен сырнӑ трагизмлӑ поэмӑсем нумайӑшне поет хӑйӗн поэтла шухӑш-кӑмӑлӗ вылянӑ тӑрӑх сырнӑ пек, вӗсем поэта Инҫетри Хӗвелтухӑҫ „екзотики ӑшне путма" сӑлтав паракан произведенийӗсем пулнӑ пек туйӑннӑ. Анчах ҫакна калама: „Гяур", „Корсар", „Лара" произведенийӗсен никӗсӗ—Байрона тарӑхан пӑлхатнӑ гуманизм темӗ—пурнӑҫа кӗмен ӗҫсен, усӑ курайман вайсен, общественлӑ хӑйсен чӑн-чӑн вырӑнне тупайман етемлӗх вай-хӑвачӗн, таланчӗн, туйӑмӗсен теми пулнӑ.

Буржуалӑ критикӑ ҫӗрре кӑна мар Байрона етемлӗхе курайман ҫын вырӑнне хурса кӑтартма пӑхнӑ. Чӑнипе илсен, Байрон ун куҫӗ умӗнчех сыхсене ҫине тарӑхан, чӗре ыратмалах тарӑхан ҫын пулнӑ, вӑл ҫав условисене курайман. Вӑл халӑх массисен чухӑнлӑхӗ тата правасӑрлӑхӗ ҫине, пусмӑрлакан классен мӑшкӑлӗ тата вӗсен ирсӗр ӗҫӗсем ҫине, нацилӗ шовинизм ҫине, експлоататорсен пӗчӗк ушкӑнӗн интересӗсемшӗн мӗн вӗлерекен вӑрҫӑсем ҫине тарӑхнӑ.

„Вӑрҫӑ таса—ирӗклӗхшӗн пырать
пулсан;
Анчах вӑл—мӑшкӑл ҫимӗҫӗ ҫеҫ
пулсан,
„Сын пусмалли вучах" йатне ӑна кам
панӗ?"..—

тесе сырнӑ вӑл „Дон-Жуан" саккӑрмӗш йурринче.

Етемлӗх питех те ӗлӗкренпе интереслентернӗ темӑ — етемлӗх ваҫҫын пӗлӳ ҫинчен таса кӑвар вӑрласа илнӗ, турӑсемпе кӗрешекен титан Прометей теми Байрона ачаранах илӗртнӗ. Байрон хӑйӗн „Прометейне" ун кӳнӳҫлӗнче „етем вӑйӗн символне" курса ҫырать. Прометей геройла тӳмӗ, ҫак пысӑк мар сӑвӑра пулнӑ тата хушӑскер, кайарахха „Манфреда" тата „Каина" хӑй йеверлӗ ӳсе пырать. Малтан пӗччевлӗх тата трагизмӑлӑ кӑмӑлсӑрлӑх теми пулнӑскере, кайран Байрон чылайах тарӑнлатать тата вӑл темӑна философла никӗс парать. Кунта уҫҫӑнах турра хирӗҫ кӗрешни, чӑннипе — Байрон атеисӑмӗ палӑрать. Англи реакционерӗсем тата чиркӳ ҫыннисем Байронӑн ҫак „сатанала" произведенийӗсене тӗп туса хума тӑрӑшнӑ; ун поэзинче вӗсем нумайах пулмасть пулнӑ Франциri революци тӑвӑлӗн сассисене илтсе шикленнӗ, ун поэзинче вӗсем етемлӗх ӑс-тӑнӗ умӗнче реакципе тирани вайсӑр, етемлӗх ӑс-тӑнӗ пурне те ҫӗнтерме пултарать тесе вӗрентнин сассисене шикленсе итленӗ.

1816 ҫулта ҫуркунне Байронӑн йаланлӑхах Англирен тухса каймала пулнӑ. Политикла сивӗч выступленисем тата ирӗклӗхшӗн тӑрӑшни ун поэзине йаланах ыттисенчен уйӑрса тӑнӑ, ҫавӑнпа та поет ҫине Англи правителстви тата „аслӑ ҫынсем" тахҫантанпах ӗнтӗ шанчӑксӑрӑн пӑхнӑ. Ҫемйери телейсӗр пурнӑҫ, Байрон арӑмӗпе уйӑрӑлни — ӑна пӗтӗм халӑх умӗнче турӑсӑр тата бунтовщик вырӑнне хурса унтан мӑшкӑлама сӑлтав туса панӑ.

Ирӗксӗрленипе Англирен тухса кайни ҫапах та Байроншӑн хӑй йеверлӗ ырлӑх туса панӑ. Байрон Италире, хӑй вырнаҫнӑ ҫӗрте, йулашкинчен, хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗнче тупайманнине тупнӑ: вӑл хӑйӗн вӑйӗпе активлӑн усӑ курма, политикла хӗрӳлӗн ӗҫлеме тата кӗрешме май илнӗ. Вӑл карбонарисен вӑрттӑн ӗҫлекен нацилӗ-ирӗклӗх общественне кӗнӗ, восстани хатӗрлес ӗҫре вирлӗн хутшӑнса ӗҫленӗ, вӑл восстани Италире республикӑ туса хумала пулнӑ тата ӑна Австри пусмӑрӗнчен хӑтармала пулнӑ. Политикла активлӑн ӗҫленӗ ҫулсенче ҫавӑн пекех

Байрон хӑйӗн творчествине те пысӑкӑн пулман сӳлӗпе хакланӑ. Ҫавӑнта ӗнтӗ, Италире, вӑл хӑйӗн ӗнтӗ паха политикла сатирисене—„Бронзовый век", „Видение суда" произведенийӗсене сырнӑ; ҫакӑнта ӗнтӗ вӑл „Дон-Жуана" сырнӑ, вӑл поэмӑна Гете тата Пушкин, поэмӑна сырса пӗтермен пулнӑ пулин те, Байрон сырнӑсенчен чи лайӑххи тесе хакланӑ.

„Дон-Жуан" поэмӑна — йуратура та вӑрҫӑра та пӗр пек телейлӗ ҫамрӑкан, хӑйӗн ӑс-хакӑлӗпе нимӗнле те уйӑрӑлса тӑман ҫамрӑкӑн пурнӑҫӗнче пулса иртнӗ тӗрлӗ ӗҫсен историне,—Байронӑн современникӗсем чылайӗшӗ ӑнланса илеймен. Тӑшмансем кӑна мар, поетӑн тусӗсем те ӑнланнӑ ҫак йаланхи пек мар поэмӑра нимӗн те курман. Ҫав вӑхӑтрах Байрон „Дон-Жуан" ҫинчен ҫапла калать: ҫак поэмӑ — пуринчен те ытларах килӗшекенни, ӑна питӗ тӑрӑшса сырнӑ. Байрон ӗлӗкхи пек романтикла ӳстерсе кӑтартмасть. „Дон-Жуанри" питех те вӑйлӑн пырса тӗкӗнекен отступленисенче вӑл хӑй вӑхӑтӗнчи традицилӗ фетишсен кӑтартулӑ тасалӑхӗн ореолне сӗвсе ывӑтать. Реакцилӗ милитарисӑм, тӗнпе чиркӳ, буржуалӑ ҫемйӗ, Англири парламентарисӑм тата Российӑри крепостничествӑ—ҫаксем кашни хӑй черечӗпе хайар сатирӑ мӑшкӑлӗ пулса тӑраҫҫӗ. Поемӑра лирисӑм, поет чун-чӗринчен тухакан чӑн-чӑн туйӑмсем нумай. „Дон-Жуан"—вӑл сатирӑ та, вӑл моралле мӑшкӑла хирӗҫ тӑни те, вӑл тивӗҫлӗ, чӑн-чӑн йурату туйӑмӗ те.

Байрон Италири восстани ҫине пысӑк шанчӑк хунӑ. Ҫав восстание путарса лартнӑ. Вара поет хӑйӗн умне йаланхи пекех хӗрӳлӗ задачӑ лартнӑ: Грецири нацилӗ-ирӗклӗх йухӑмне хута кӗресси. Греци ун чухне Турци аллинче тӑнӑ. 1823 ҫулта Байрон Грецине кайнӑ, Грецин нацилӗ-ирӗклӗх ҫарӗнчи хӑй пухса йӗркеленӗ отрйадӑн пуҫне тӑнӑ. Байрон 1824 ҫулти апрел уйӑхӗнче сив - чирпе чирлесе вилнӗ.

Маркс вӗрентнӗ тӑрӑх, Байрон нихӑҫан та вӗҫне ҫитиех кӗрешекен чӑн-чӑн революционер пулман. Вӑл общественна хирӗҫ тӑни—пӗччен пӑлхавҫӑ кӗрешни пулнӑ, вӑл халӑх массисен революцилӗ йухӑмӗпе сыхӑнса тӑман. Халӑхран ҫавӑн пек татӑлса кайса уйрӑмӑн тӑни социалӑ йухӑм пулакан байронисӑмӑн тӗп ҫитменлӗхӗ пулнӑ. Анчах ҫавӑнпа пӗрлех, Байрон хӑй вӑхӑтӗнчи малта пыракан радикалӑ поетсен шутӗнче тӑнӑ. Вилес умӗн ҫырнӑ „Из дневника в Кефалонии" йатлӑ питӗ те паха сӑввинче вӑл ҫапла каланӑ.

„Вил тӗлӗксем курап—ӑҫтан сывран?
Тиран мире таптать—парӑнӑп-и еп?
Кар ҫисҫӗ тырӑ—тӑхтамӑп еп вырма.
Йӗри-таврах йӗплӗ хулӑ; еп тӗлӗрмен;
Кунсеренех ман хӑлхара труба йурлать,
Унпа пӗрле чӗрем йурлать"...

Байронӑн „Бронзовый век" произведенинчи —„Священный союз" ҫинчен ҫырнӑ сатирӑри—сулӑмлӑ строфисем, ҫӗр ҫул ытла ӗлӗкрех ҫырнӑскерсем, халичченех пайанхи кун пулса иртекен событисем ҫинчен ҫырнӑ пек политикла вӑхӑтлӑн йанӑраҫҫӗ. Сӑмахран, Байрон 1823 ҫулта Испанири ирӗклӗх йухӑмӗ ҫинчен ҫырнине халӗ пӑлханмасӑр вулама пулать-и:

„Тул ҫутӑлать: Испанин мухтавлӑ кӗҫҫӗ
Аваллӑх паттӑрлӑхпе тӑшмансене
касать...
Килти хайар тӑшман халех туйать
ӗнтӗ:
Аваллӑх тумӗ каллех Кастилӗн
ывтӑнать,
Тореадор! Ҫӗклен! Сехет сан ҫитрӗ!..
Ҫӗклен, Гидальго! иртнӗ кун сасси
Каллех йанрарӗ:—Испани,
хӗрӳленрех!
Хӗрӳленрех! Пӗрлешӗр хайар ушкӑна,
Кольчугсенчен чӗрӗ стена туса,
Испанин ҫирӗп хӳтӗлӗхне туса,
Ӑна Наполеонран хӳтӗленӗ пек хӳтлӗр:
Хӑруш кӗрешӳре вилӗмрен ан
шиклешӗр...
Сарагоссӑн тачӑ ҫирӗп стенисем,
Аслӑлӑх вӗсене ҫӗнтернинче хӑйсене;
Демонсем пек харсӑр арҫынсене,
хӗрсене,
Хӑйсен маттурлӑхпе вилӗмсӗр-
скерсене;
Толедо кинжалӗн вичкӗнлӗхӗ
Тата Кастилӗн мухтавлӑ копйи;
Хӑйулӑ стрелоксемпе вӗсем тӗл пени,
Испани учӗ хӑвӑрттӑн чупни;
Мускав вут-хӗмӗпе ҫунан Мадрид,
Сид пек паттвар ҫынсен ҫӗршывӗ...
Ҫапла вӑл пулнӑ, халӗ те, ӳлӗм те
пулать..."

Российӑра Байрона декабирссем пысӑккӑн хакланӑ. XIX ӗмӗрти, вырӑссен чи аслӑ поечӗсем—Пушкинпа Лермонтов—чылай чухне Байронран вӗреннӗ. Пушкинӑн малтантарах ҫырнӑ „кӑнтӑр" поемисенче, „Кавказский пленникран" пуҫласа „Цыганы" патне ҫитех, Байрон поезийӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Пушкин ҫак ҫулсенче Байронран вӑйлӑ та вичкӗн ӑсхакӑлсене, пултарулӑ туртӑмсене кӑтартма вӗренет; декабриссем пекех, вӑл пуринчен ытларах Байрон поезинчи пӑлхавҫӑла, ирӗклӗхе йуратакан шухӑш-кӑмӑла ҫӳлӗ вырӑна хурса хаклать.

Ҫапах та, „Цыганы" поемӑрах та ӗнтӗ Пушкин байронисӑм ҫине ҫӗнӗлле, критикле пӑхма тытӑннине курма пулать.

Байронисӑмӑн идейӑлӑ пӗрйенлӗхне ӑнланнӑ пулин те, Пушкин хӑй писсе ҫитнӗ ҫулсенче те Байрон творчествине тарӑнӑн хаклама пӑрахман. Вӑл Байронӑн ирӗклӗхе йуратнипе тата романтикӑлӑ хӗрӳлӗ пафоспа тулли творчествине сӑвӑла ҫырса пуринчен те лайӑхраххӑн кӑтартнӑ. „К морю" йатлӑ сӑвӑн паха строкисенче вӑл Байрон вилнӗ хыҫҫӑн ҫапла ҫырнӑ:

„Вӑл пулнӑ, тинӗс, сан поет!
Сан сӑн пек ун сӑн-сӑпачӗ пулнӑ,
Сан пурнӑҫ витӗр вӑл ҫуралнӑ:
Сан пек кӑватлӑ, тарӑн та салху,
Сан пек, ниме вӑл парӑнман".

„Дон-Жуанра", шухӑшпа темиҫе ӑру урлӑ ҫӗнӗ ҫынсене курса, хӑйпе пӗр вӑхӑтри общестӑвӑ ҫине мамӑнт скелечӗ ҫине пӑхнӑ пекех тӗлӗнсе пӑхма пултаракан ҫӗнӗ ҫынсене курса, Байрон ҫырнӑ:

„...Вӑл хӑрушлӑха манма
Пултараймасть тӗнче. Йунлӑ ҫӗмрӗк-
сене,
Чул катӑксене еп каластаратӑп
Пусмӑрлӑх ҫинчен. Ӑру-ӑрусем
пӗлчӗр:
Пурне те мар влаҫ пӑхӑнтарнӑ,
Куҫпа хӑт епӗр ирӗклӗхе курман,
Ҫапах та халӑх прависемшӗн тӑнӑ".

Совет ҫыннисем — ирӗклӗ ҫӗршывӑн ирӗклӗ ҫыннисем. Вӗсем Байронӑн, ирӗклӗхшӗн тата етемлӗх тивӗҫлӗхӗшӗн хӗрӳлӗн те паттӑрӑн кӗрешекенӗн поезине хакламасӑр тата йуратмасӑр тӑма пултараймаҫҫӗ.

А. Елистратова.

Ҫуракине хатӗрленессине хӑвӑртлатмала

Нумайах пулмасть, Ҫӗмӗрле районӗнчи колхоз председателӗсемпе йалсовет председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу районра ҫитес ҫуракине хатӗрленес ӗҫ мӗнле пулса пыни ҫинчен колхоз председателӗсен отчотне итлерӗ.

Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхоз председателӗ Кулйев ҫапла каласа пачӗ:

— Епӗр, хамӑр колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче, парти Обкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 100 пӑтран кайа илекен пӗр колхоз та пулмала мар тесе, пирӗн умма кӑларса тӑратнӑ задачӑна мӗнле майпа пурнӑҫласси ҫинчен тӗплӗн, сӳтсе йаврӑмӑр. Кун хыҫҫӑн пӗтӗм вӑйа ҫуракине хатӗрленесси ҫине хутӑмӑр. Колхозниксем ҫитес ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Пайанхи куна 172 гектар ҫинче йур тытрӑмӑр. Кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ 10 центнер, кӗл 30 центнер, фосфорит ҫӑнӑхӗ 4 тоннӑ хатӗрлерӗмӗр. Уйа пин лав тислӗк кӑларма палӑртнӑ пулсан, 1500 лав кӑлартӑмӑр. Лаша кӳлмели тавраш-сене пӗтӗмпех йусаса ҫитернӗ. Акмали вӑрлӑхсене трийер витӗр кӑларса, алӑпа суртлас ӗҫе тытӑннӑ. Йалхуҫалӑх машинӗсем йусавлӑ.

Ҫавнашкалах Хутарти Ленин йачӗпе тӑракан колхоз, „Красноармеец", „Подборное" колхозсем те ҫуракине хатӗрленес ӗҫсем тунӑ. Ҫав хушӑрах ҫуракине хатӗрленес ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанса ларакан колхозсем те пур.

„14 лет Октября" (председателӗ Шараҫкин), „Красный пахарь", „Красный Атмал", „Путь Ленина", Магарин йалсоветне кӗрекен пур колхозсем те ҫуракине хатӗрленессипе нимӗн те туман. Районри ҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫре йертсе пыман. Ҫавӑнпа та Ҫӗмӗрле районӗнче чылай колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫ чӑтма ҫук кайа йулса пырать.

Пайанхи куна районра вӑрлӑх суртласси 28 процент, суртлӑ вӑрлӑх улӑштарас плана 3,9 процент, торф хатӗрлес плана 2,3 процент, минераллӑ удобренисене—9,3 процент, кӗл пухассине—18,3 процент ҫеҫ тултарнӑ. Йалхуҫалӑх машинисене йусасси те чӑтма ҫук йулса пырать.

Колхозсенче массӑлӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫпе ӗҫлемеҫҫӗ. Ҫӗмӗрле, Йегоркино, Кадеркино тата ытти колхозсенче те суйлав иртнӗ хыҫҫӑн агитаторсем пачах ӗҫлеме пӑрахнӑ.

Канашлу халӑх тӑшманӗсен йулашкийӗсене пӗтерсе пырса ҫуракине хатӗрленессине тивӗҫлӗ вырӑна лартма пулчӗ.

Й. Мозйаков.

Трактористкӑсем

Пирӗн республикӑри колхозсем вӑтам хисеппе кашни гектартан 100 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата машинӑ-тракторлӑ станцисенчи трактористсемпе трактористкӑсем кашни трактор пуҫне 1000-шер гектар сухалама обйазателствӑсем илеҫҫӗ. Вӗсем иртнӗ ҫулта лайӑх ӗҫленӗ пулсан, кӑҫал татах та лайӑхрах ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

Вӑрнар МТ Станцинчи трактористкӑсен бригадине Харитонова комсомолка йертсе пырать. Ҫак бригадӑ иртнӗ ҫулта кашни трактор пуҫне 650 гектар (нормӑ 600 гектар) сухалама обйазателствӑ илсе, 900 гектар ытларах сухаланӑ. План тӑрӑх молотилкӑпа 700 тоннӑ тырӑ ҫапас вырӑнне 1300 тоннӑ ҫапнӑ.

Харитонова бригадинче 6 трактористкӑ, 6 прицепщицӑ ӗҫленӗ. Халӗ 6 прицепщицӑ трактористкӑсем пулса тухнӑ. Харитонова йертсе пыракан бригадӑ кӑҫал вӑтам хисеппе кашни трактор пуҫне 1000-шер гектар сухалама обйазателствӑ илнӗ.

Тӑвайри МТСтанцинчи хӗрарӑм-трактористкӑсен иккӗмӗш бригадине Кириллова йертсе пынӑ. Ку бригадӑ ҫумӗнче 3 трактор, 1 молотилкӑ, тепӗр сейалкӑ пулнӑ. 6 трактористкӑ, бригадир тата унӑн помощникӗ, пурӗ 8 ҫын ӗҫленӗ.

Хӗрарӑмсен бригади улттӑмӗш бригадӑпа ӑмӑртса ӗҫленӗ. Ӑмӑртса ӗҫлени хӗрарӑмсен иккӗмӗш бригадине МТС-че пӗрремӗш вырӑн йышӑнма май панӑ. Кашни трактор пуҫне 900-шер гектар сухаланӑ. Уйрӑм трактористкӑсем хӑйсен нормисене йаланах ытлашшипех тултарса пынӑ. Акӑ, Иермолайева кашни сменӑрах 7,3-шер гектар, Порфирйева 8-шер гектар сухаласа пынӑ. Халӗ Порфирйева трактористсен бригадин бригадирӗ пулма вӗренет.

Кӑҫал Кириллова йулташ бригади те кашни трактор пуҫне пиншер гектар сухалама сӑмах панӑ.

Вӑрмарти МТ Станцинчи Петрова трактористкӑ 695 гектар сухаласа 727 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӑл тырӑ илнисӗр пуҫне 1819 тенкӗ укҫан илет. Улатӑр МТС-чи Нелигина трактористкӑ иртнӗ ҫулта 520 килограм ҫунтармалли йапала перекетленӗ. Тракторпа сухаламалли нормӑна ытлашшипех тултарнӑ.

Золотникова трактористкӑ Йелчӗк МТСтанцинче иртнӗ ҫулта пуҫласа ӗҫленӗ. Апла пулсан та вӑл хӑйӗн сухалас нормине тултарса, ҫунтармалли йапаласене 170 килограм перекетленӗ. Вӑл тӗштырӑ илнипе пӗрлех 1800 тенкӗ укҫан илет.

Шӑхасан МТСтанцинчи хӗрарӑм-трактористкӑсен бригади те иртнӗ ҫулта аван ӗҫленӗ. Николайева комсомолкӑ бригади вӑтам хисеппе кашни трактор пуҫне 850-шер гектар сухаланӑ. Халӗ ку бригадӑ хӗрсех ҫитес ҫуракине хатӗрленет. Ун бригади ҫумне ҫирӗплетнӗ 3 трактора, сейалкӑна тата плугсене тӗплӗн йусанӑ. МТ Станцинче пурӗ 45 трактор. Вӗсенчен 38 тракторне йусанӑ. Ҫак ҫитес кунсенчех тата 7 тракторне йусаса ҫитереҫҫӗ. Николайева бригадир иртнӗ ҫулта пӗр пӗччен 350 пӑт тӗштырӑ, 1200 тенкӗ укҫан илнӗ.

Ҫапла ӗнтӗ трактористкӑсен бригадисем иртнӗ ҫулта чаплӑ тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Кӑҫал та вӗсем тата чаплӑрах тӗслӗхсем кӑтартма пулаҫҫӗ. Вӑл бригадӑсене кулен ӗҫре пулӑшса, йертсе пыни кирлӗ.

Кӗр. Калинин.

Вӑйларан та вӑйлӑ тырпулшӑн

Вӑрмар районӗнчи Аслӑ Чакри Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхоз пайанхи куна йалхуҫалӑх машинисене йусаса пуҫтарса лартнӑ. Акмали вӑрлӑхран 50 процентне алӑпа суртлама йышӑннӑ. Халӗ вӑрлӑх суртлас ӗҫ анлӑн саралса пырать. Колхозра пӗтӗм ӗҫ вӑйне удобренисем хатӗрлес ӗҫе хутшӑнтарнӑ.

Пайанхи куна 2100 лав торф, 1950 лав тислӗк уйа кӑларнӑ, кӗл 30 центнер, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ 20 центнер, фекали 10 лав пухса хатӗрленӗ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах Николайев В., Николайев М. тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

„Карл Маркс" колхоз „Аниш" колхозпа ӑмӑртать.

„Аниш" колхозра та ҫуракине хатӗрленес ӗҫе лайӑх организациленӗ.

В. Андрийанов.

Ответлӑ редактор заместителӗ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„ЧӐВАШКИНО" ТРЕСТНЕ
Економист-плановик
тата
Бухгалтер-ревизор
к и р л ӗ
Заҫати вӑхӑтӗнче „Чӑвашкино" тресчӗн аслӑ бухгалтерӗ патне пымала. Саслӑ кино-театр ҫурчӗ.
2—1

Чӑваш АССР Вырӑнти промышленнӑҫ Халӑх Комиссариатне
йалан ӗҫлеме кирлӗ:
Економист плановик,
Економист финансист
Бухгалтер тата счетовод.
Ленин урамӗ, 3. ЧАССР Вырӑнти промышленнӑҫ Халӑх Комиссариачӗ.

Нефть продуктисем илекенсене пӗлме
1938 ҫулта Чӑваш республикинчи нефть базисене нефть продуктисем тӑратма договор тумали срука
февралӗн 10-мӗшӗччен тӑснӑ.
Нефть продуктисем илекенсен кӑтартнӑ срукчен договорсем туса пӗтермеле.

Вырӑнти Промышленнӑҫ Халӑх
Комиссариачӗн
ПОЛУКИРЕРИ ХӐМА ЗАВОДНЕ
Аслӑ бухгалтер тата „Фордзон" тракторпа ӗҫлеме
тракторист кирлӗ.
Ӗҫукҫи килӗшӳ тӑрӑх.
3—3

ЙУТҪӖРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Теруел фронтӗнче хальтe вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Англи пичечӗ пӗлтернӗ тӑрӑх Теруелтен ҫурҫӗр йенче республиканецсен линине татма хӑтланса, пӑлхавҫӑсем ҫапӑҫура нумай артиллери орудийӗсемпе тата самолетсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Йанварӗн 20-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсем пит нумай авиаци пулӑшнипе, Селадас районӗнче республикӑ ҫарӗсем ҫине атака тунӑ. Атакӑсене сирсе йанӑ. Селадасран кӑнтӑрарах пӑлхавҫӑсем калама ҫук нумай ҫухатусем туса Ель-Мулетон текен высотӑна ҫавӑрса илнӗ. Фашисла кавалери республиканецсен оборони вырнаҫнӑ ҫӗре саваӑл пек хӗссе кӗме хӑтланса пӑхнӑ, анчах ӑна республиканецсем сирсе йанӑ.

200 фашисла самолет, вӑл шутрах 80 бомбардировщик, Теруел ҫинче тата республикӑ тылӗнчи йалсем ҫинче татти-сыпписӗр вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Йанварӗн 20-мӗшпе 22-мӗш хушшинче сывлӑшра ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра Теруел участкинче фашиссенне 9 самолет персе ӳкернӗ. Республиканецсен 3 самолет пӗтнӗ.

* * *

Йанварӗн 21-мӗшӗнче республиканецсен 20 самолечӗ пӑлхавҫӑсен тӗп штабӗ вырнаҫнӑ Саламанкӑ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Фашисла авиаци Испанин Вӑтаҫӗр тинӗс сыранӗсем ҫине тӑтӑшах тапӑннине ответлесе республикӑ командованийӗ Саламанкӑ ҫине бомбӑсем пӑрахма решени йышӑннӑ. (ТАСС)

Англи рабочийӗсем Йапони парохочӗ ҫине тавар тийеме килӗшмеҫҫӗ

Йанварӗн 21-мӗшӗнче Миддльсбро (Англи) портӗнче ӗҫлекен рабочисем Йапонин „Хурана-Мару" йатлӑ парахочӗ ҫине хурҫӑла чукун тийеме килӗшмен. Транспортниксен профсойузӗн вырӑнти пайӗн руководителӗсем рабочисене ирӗксӗрех парохода тийеттерме хӑтланнӑ, анчах капла хӑтланни ӑнӑҫлӑ пулман. Пароход сывӑх кунсенчех Миддльсбороран груз-сӑрах тухса кайать пулмала. (ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Йулашки кунсем хушшинче Китайӑн тӗп фронтӗнче пысӑк операцисемех палӑрмаҫҫӗ. Йанцзы йухханшывӗ ҫинчи Ухху тавра тата Ханчжоу таврашӗнче халь те ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Тӗп фронтра Китай партизанӗсем пысӑк активлӑхпа ҫапӑҫаҫҫӗ. Йанварӗн 21-мӗшӗнче Шанхайран 30 километр кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле Китай партизанӗсемпе Йапони ҫарӗсем хушшинче хайар ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Ҫапӑҫува пин партизан ытла хутшӑннӑ, вӗсем винтовкӑсемпе, гранатӑсемпе тата пулеметсемпе хӗҫпӑшалланнӑ пулнӑ.

Ҫурҫӗр Китайра Йапонипе Китай та, пысӑк ҫапӑҫусене хатӗрленсе, ҫарсем пухаҫҫӗ. Англи пичечӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Ҫуйчжоу районне (Лунхай чукунҫулӗ ҫинче) Китай салтакӗсене 200 пин ҫынна йахӑн илсе пынӑ. Ҫуйчжоуна хӳтӗлеме Китай командованийӗ ҫавӑн пекех тата хӑвӑрт вӗҫекен 50 самолет хатӗрленӗ. (ТАСС).

Китай халӑхне вӑрҫа хатӗрлени

Шанхайран пӗлтернӗ тӑрӑх, хальхи вӑхӑтра Китайра мӗлйун халӑха мобилизацилесе ҫар ӗҫне вӗрентеҫҫӗ.

Хулана хӳтӗленӗ ҫӗре студентсем хутшӑнма пултарччӑр тесе, Кантонри Сун Йат-сен йачӗпе тӑракан университета тата ытти вӗрену заведенийӗсене пӗр уйӑхлӑха хупаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата, Кантонра ҫар составӗнче тӑман милицине партизанла методсемпе вӑрҫма вӗрентеҫҫӗ, вӑл милицин хисепӗ 200 пин ҫынна ҫитет.

Хунань провинцинче халӑха ҫар ӗҫне вӗрентме йатарласа комиссисем тӑваҫҫӗ.

(ТАСС).

„Чӑваш коммунӗ" сыранса илмели хаксем: 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 5 пус, 1 уйӑха—2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 44. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. 1—1 п. л.